ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул Январь 18 ЭРНЕКУН
№ 13 (8665)
Хакĕ 20 пус.
34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
Ленин кунĕсем умĕн (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ. И. Волков.—Йышăннă решенисене куллен пурнăçламалла; В. Федотов.—Коммунистсен активлăхне ÿстеретпĕр; Г. Русанов.—Парти вĕренĕвне ертсе пырассине вăйлатмалла (2 стр.).
Ю. Борисов.—Большевизм историйĕнчи паллă тапхăр. Партин Прагăри конференцийĕ уçăлни 40 çул çитнĕ кун тĕлне (2 стр.).
Сталин юлташ умĕнче йышăннă обязательствăсене чыслă пурнăçлассишĕн. ВКП(б) райком секретарĕсемпе райсовет исполкомĕсен председателĕсен вăрман хатĕрлекен организацисен руководителĕсен республикăри канашлăвĕнчен (3 стр.).
В. Андреев, В. Семенов.—Малта пыракансен опытне çине тăрса сармалла (3 стр.).
В. Толстов, А. Яковлев, Е. Афанасьев.—Çуракине тĕплĕн хатĕрленмелле (3 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
ООН Генеральнăй Ассамблейин улттăмĕш сессийĕ (4 стр.).
«Мирпе прогресс çĕршывĕ пулса тăракан Российăна—мухтав!» Тĕнчери промышленность выставкинче (4 стр.).

Пионер организацийĕсене ертсе пырас ĕçе вăйлатар

Большевиксен партийĕпе Совет правительстви тата аслă Сталин ачасен, ÿссе пыракан çамрăк ăрăвăн пурнăçне телейлĕ, тулăх та савăнăçлă тăвассишĕн куллен тăрăшаççĕ. Пирĕн çĕршывра кашни ачана обязательнăй йĕркепе çичĕ çултан кая мар вĕрентмелле тунă. Çак закон кашни ялпа хулара ăнăçлă пурнăçланса пырать.

Правительство çĕнĕ шкулсем, ача учрежденийĕсем уçма, вĕсене тытса тăма çулсерен укçа-тенкĕ нумай уйăрса парать. Çакна эпир хамăр республика пурнăçĕнчен те аван куратпăр. Пирĕн республикăра Октябрьти Социализмлă Аслă революциччен вуншар шкул кăна ĕçленĕ пулсан халĕ республикăра 529 пуçламăш шкул, 432 çичĕ çул вĕренмелли шкул тата 104 вăтам шкул ĕçлет, вĕсенче пурĕ 190.448 ача вĕренет. Республикăра халăха вĕрентес ĕç валли кăна пĕлтĕр 172 миллион та 202 пин тенкĕ укçа уйăрса панă. Ачасене лайăх вĕренме, канма пур условисем те çителĕклĕ. Çуллахи вăхăтра пионер лагерĕсем нумай уçăлаççĕ, походсемпе экскурсисем пулаççĕ.

Совет шкулĕ ÿссе пыракан çамрăк ăрăва коммунистла воспитани парса коммунизм обществин хастарлă строителĕсене вĕрентсе хатĕрлет. Çак задачăна пурнăçлас ĕçре В. И. Ленин ячĕпе тăракан пионер организацийĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пионер организацийĕ чи маççăллă организаци, вăл пирĕн республикăра кăна 130 пин ытла ачана пĕрлештерсе тăрать.

Комсомолăн XI-мĕш съезчĕ хыççăн пионер организацийĕсем хăйсен ĕçне чылай вăйлатрĕç. Вĕсем вĕренÿ пахалăхне лайăхлатассишĕн, çирĕп дисциплинăшăн хастарлăрах кĕрешме пуçларĕç, обществăллă ĕçе ытларах хутшăнакан пулчĕç. Пионерсенчен чылайăшĕ наукăна вĕренес тĕлĕшпе паха тĕслĕх кăтартаççĕ. Вĕсем шкулта лайăх вĕренсе илнĕ пĕлÿпе пурнăçра усă курма тăрăшаççĕ. Етĕрне районĕнчи Мăн Йĕкĕтри çичĕ çул вĕренмелли шкулти IV-мĕш класри пионерсем, Шупашкар районĕнчи Çатра Хучахматри çичĕ çул вĕренмелли шкулти виççĕмĕшпе тăваттăмĕш классенчи пионерсем, Кувакино районĕнчи Первомайски тата Мишуковăри çичĕ çул вĕренмелли шкулти, Первомайски районĕнчи Чапаевкăри пуçламăш шкулти пионерсем иртнĕ вĕренÿ çулне ăнăçлă вĕçлерĕç. Çĕрпÿ районĕнчи шкулсенчи 33 отрядра пĕр класрах икĕ çул ларакан пĕр пионер пулман. Çак ăнăçлăха тума, паллах, пионер организацийĕсем лайăх ĕçлени нумай пулăшнă. Çакăн пек ĕçлекен пионер отрячĕсемпе дружинăсем пирĕн республикăра сахал мар. Юлашки вăхăтра пионер организацийĕсен ĕçне вăйлатнă шкулсенче вĕренÿ пахалăхĕ, дисциплина палăрмаллах лайăхланнă. Çак тĕлĕшпе Шупашкарти пĕрремĕшпе виççĕмĕш, Канашри иккĕмĕш. Ишлей районĕнчи Ишекри вăтам шкулсем уйрăмах паха тĕслĕх кăтартаççĕ. Вăл шкулсенчи учительсем вĕренÿ пахалăхне лайăхлатассине пионер организаци ĕçне вăйлатнинчен тытăннă.

Анчах нумай дружинăсенче пионерсен ĕçне тивĕçлипе йĕркелемен, вĕсен ĕçĕ содержанийĕ енчен чухăн. Чылай дружинăсен ĕçĕсем ачасене коммунистла воспитани парас тĕлĕшпе тăракан задачăсене тивĕçтерейменçĕ, шкул директорĕсемпе учительсене вĕренÿ пахалăхне, дисциплинăна лайăхлатас ĕçре кирлĕ пек пулăшмаççĕ.

Пионер организацийĕсен тĕп задачи вăл—вĕренÿ пахалăхне, дисциплинăна лайăхлатассишĕн кĕрешесси пулать. Пионер хăйĕн малашлăхне лайăх курса, шанса тăракан, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн ырми-канми кĕрешекен çын пулса ÿсмелле. Комсомол тата пионер организацийĕсен кашни пионера кирек хăçан та, пур çĕрте те примерлă пулма вĕрентмелле. Шкул ачисен правилине пурнăçласси кашни пионерăн чыслă ĕçĕ.

Анчах та чылай пионер отрячĕсемпе дружинăсенче ĕç çавăн пек йĕркеллĕ пымасть-ха. Начар паллă илекенсем, шкулти дисциплинăна пăсакансем, пĕр класрах икĕ çул ларакансем пионерсем хушшинче те нумай тĕл пулаççĕ.

Хăшпĕр пионер отрячĕсемпе звеносем хут çинче кăна шутланаççĕ.

Пионер организацийĕсен ĕçĕнче отряд е дружина сборĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Лайăх хатĕрленсе иртнĕ сбор кашни пионершăн нумайлăха асра юлать. Анчах комсомолăн хăшпĕр работникĕсем, вожатăйсем çак ĕç çине тивĕçлипе пăхмаççĕ. Сборсене ытларах иртерме тăрăшса вĕсем унăн содержанийĕ, пахалăхĕ çинчен манса каяççĕ. Сборсем час-часах класри урок пек пулса иртеççĕ. Чылай чухне сборсенче ачасен пуçарулăхне, вĕсен творчествине курма çук. Ачасем вырăнне вожатăй е класс руководителĕ ытларах калаçать.

Отрядри политикăллă-воспитанилле тата культурăллă-массăллă ĕçсене ачасен уйрăмлăхне, вĕсен шухăш-кăмăлне шута илсе туса пымалла.

Ачасене обществăллă ĕç пани вĕсене коллектив умĕнче ответлă пулма, отряд шанса панă ĕçе юратса тума вĕрентет, ĕçе хăнăхтарать. Анчах хăшпĕр шкулсенче çак тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пур. Пĕрисене темиçешер ĕç парса вĕренÿре чăрмав тăваççĕ. Çав вăхăтрах обществăллă ĕçе пачах хутшăнтарман пионерсем те сахал мар. Ачасене тĕрĕс воспитани парас тĕлĕшпе обществăллă ĕçе хăнăхтарни питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа ку ĕçре нимĕнле формализм та пулмалла мар.

Комсомолăн XI-мĕш съезчĕ хăйĕн решенийĕнче: «пионер организацийĕ лайăх ĕçлесси чи малтан пионер вожатăй мĕнле ĕçленинчен килет» тесе çырса хунă. Вожатăй пионерсене аслă çулпуççем Ленинпа Сталин çинчен, совет çыннисен паттăр ĕçĕ çинчен, Тăван çĕршыв, большевиксен партийĕ çинчен каласа парать. Вăл ачасене ĕçе вĕрентет.

Партипе комсомол пионер вожатăйне ÿссе пыракан çамрăк ăрăва коммунистла воспитани парас тĕлĕшпе пысăк та хисеплĕ ĕç шанса панă. Çакă чыс вожатăйсене хăйсен ĕçне юратса тума, пĕтĕм пĕлĕвĕпе пултарулăхне ачасене пама хушать. Вожатăй кулленхи ĕçре учительсемпе, шкул директорĕпе тачă çыхăнса ĕçлемелле, педагогика ăсталăхне вĕренсе ачасен коллективне хăй хыççăн илсе пыма пĕлмелле.

Çавăнпа ВЛКСМ райкомĕсен вожатăйсене куллен пулăшса, вĕрентсе пыни кирлĕ. Çак тĕлĕшпе Çĕрпÿ, Йĕпреç райкомĕсем начар мар ĕçлеççĕ. Çав вăхăтрах ВЛКСМ Советски, Чурачăк райкомĕсем вожатăйсен пĕлĕвне, ĕçри хастарлăхне ÿстерес тĕлĕшпе пачах çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Кунта вожатăйсен семинарĕсене сайра хутра кăна иртереççĕ.

ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн VII-мĕш пленумĕ пионер организацийĕсен ĕçĕсене вăйлатас тĕлĕшпе ятарласа постановлени йышăнчĕ. Çак постановление ăнăçлă пурнăçласси кашни комсомолецăн, кашни пионервожатăйăн умра тăракан чыслă задачи. Пионервожатăйпа класс руководителĕ тата шкул директорĕ тачă çыхăнса ĕçлесен, комсомол райкомĕсем пионер организацийĕсене тивĕçлипе ертсе пырсан çес çамрăк ăрăва коммунистла воспитани парас тĕлĕшпе парти комсомол умне лартнă задачăна ăнăçлăн пурнăçлама пулĕ.

Ленинла комсомол пионер организацийĕсене ертсе пырас ĕçе большевиксен партийĕ шанса панă чи пысăк ĕç вырăнне хурса хаклать.

Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе комсомол, нумай миллионлă учительсен çарĕ ÿссе пыракан çамрăк ăрăва коммунистла воспитани парас ĕçе тĕпренех лайăхлатĕ.

Пĕрремĕш квартал планне срокчен тултарассишĕн

Чурачăк районĕ 1951 çулхи IV-мĕш кварталта финанс планне 103,8 процент тултарчĕ. Вăл шутран налог укçи пухмалли плана 101,5 процент, страховани енĕпе 119,0 процент, перекет касси планне 102,8 процент, тупăшран илекен укçа-тенкĕ планне 117,1 процент тултарнă.

Налог агенчĕсем 1952 çулхи пĕрремĕш квартал планне срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăртăва анлă сарса ячĕç.

Кушкă ял Советĕнче ĕçлекен налог агенчĕ Антонов юлташ пĕрремĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана февралĕн 23-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство илчĕ, вăл районти ытти налог агенчĕсене социализмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнчĕ.

„Агитатор блокночĕн“ черетлĕ номерĕ

ВКП(б) Чăваш обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ кăларакан «Агитатор блокночĕн» кăçалхи пĕрремĕш номерĕ пичетленсе тухнă. Унта докладсемпе калаçусем иртерекенсем валли «28 çул Ленинсăр, Сталин юлташ ертсе пынипе—Ленин çулĕпе» тата «Миршĕн тăракансен юхăмĕн аслăлăхĕпе вăй-хăвачĕ» ятлă материалсем пичетленнĕ.

«Агитаци ĕçĕн опычĕнчен» ятлă пайра «Вăрман—коммунизмăн аслă стройкисем валли» ятлă статья пур. Унта Вăрнар вăрманпромхозĕнчи Петров агитатор мĕнле ĕçленине кăтартса панă.

Кунсăр пуçне, «Блокнотра» калаçусем иртерме уй-хирте юр тытинни усси çинчен тата ку ĕçе мĕнле туса пыртермелли çинчен калакан фактсемпе цифрăсем пур.

Совет Союзĕ тăрăх

Плана ирттерсе тултарнă

ФРУНЗЕ, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Киргизири совхозсем иртнĕ çулталăкри ĕç итогĕсене тунă. Вĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре тунă çитĕнÿсем уйрăмах пысăк.

Киргиз ССР Совхозсен министрĕ Туратбеков юлташ ТАСС корреспондентне çапла пĕлтерчĕ: республикăри совхозсем обществăллă продуктивлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана чылай ирттерсе тултарнă. Совхозсенче ĕне выльăх шучĕ 46,5 процент, лашасен шучĕ—1,5 хут, сыснасен шучĕ икĕ хут ытла ÿснĕ. Ĕнесенчен вăтам шутпа сĕт суса илни 200 килограмм чухлĕ ÿснĕ.

Выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăша ÿстерме совхозсен коллективĕсем 1952 çулта наукăн тата ялхуçалăхĕнче малта пыракансен çĕнĕ çитĕнĕвĕсемпе усă курма тытăнаççĕ.

Çĕнĕ электростанцисем

МИНСК, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Белорус ССР-ĕнчи, Бобруйск облаçĕнчи, Копыльски районти «Победа» колхозра паян гидроэлектростанцие ĕçе янă. Колхозниксен килĕсенче тата обществăллă суртсенче Ильич лампочкисем çутатма пуçланă. Выльăх-чĕрлĕх фермисене шыв парса тăрас тата выльăх апачĕсене вĕтетсе хатĕрлес ĕçе механизациленĕ.

Брагински районти «Чирвоны кастрычник» тата «Путь к коммунизму» колхозсенче топливăпа ĕçлекен электростанцисем туса пĕтерне.

Белоруссире ялхуçалăхĕнчи ĕçсене электрификацилес ĕç анлă саралса пырать. Çак вăхăт тĕлне республикăри 730 колхоза электрификациленĕ. Ялхуçалăх артелĕсен выльăх-чĕрлĕх фермисенче тата предприятийĕсенче 2.700 мотор ытла вырнаçтарса лартнă.

Кăçал Белоруссири колхозсенче 60 электростанци лартаççĕ.

Колхозник-заочниксем

ТЕЛАВИ (Грузин ССР-ĕ). Киров ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнчи 15 колхозник аслă шкулсенче заочно вĕренеççĕ. Вĕсем халĕ Тбилиси хулине экзамен пама кайнă.

Телавски районти ытти ялхуçалăх артелĕсенче те чылай колхозниксем аслă шкулсенче заочно вĕренеççĕ. (ТАСС).

1951—1952 ÇУЛСЕНЧИ КĔРИУННЕПЕ ХĔЛЛЕХИ ВĂХĂТРА ВĂРМАН ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА «ЧĂВАШВĂРМАН» ТРЕСТ ЕНĔПЕ 1952 ÇУЛХИ ЯНВАРĔН 15-МĔШĔ ТĔЛНЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Касса хатĕрленĕ	Çул хĕррине илсе тухнă	Турттарса кăларнă
Улатăр	62,5	65,8	43,7
Элĕк	67,6	55,5	34,9
Вăрнар	74,7	60,0	34,0
Йĕпреç	64,9	53,3	35,9
Ишлей	46,3	—	19,3
Калинино	69,3	42,7	69,2
Канаш	69,8	71,6	55,2
Комсомольски	75,8	83,7	68,4
Куславкка	67,8	73,0	56,5
Красноармейски	53,9	18,7	37,4
Хĕрлĕ Чутай	70,7	50,8	—
Кувакино	43,2	51,7	20,6
Сĕнтĕрвăрри	64,3	48,8	28,0
Муркаш	105,7	108,2	—
Октябрьски	48,8	68,7	44,3
Первомайски	76,2	39,5	57,5
Пăрачкав	70,0	78,0	72,9
Советски	57,7	—	44,3
Сĕнтĕр	88,3	24,2	58,3
Вăрмар	52,9	61,9	25,8
Çĕрпÿ	50,4	67,6	40,7
Шупашкар	77,7	119,6	26,0
Чкаловски	83,1	51,7	42,2
Чурачăк	66,1	41,4	29,5
Шăмăршă	52,0	60,9	42,1
Шăхасан	61,2	62,8	37,2
Çĕмĕрле	101,7	65,1	128,9
Етĕрне	67,5	74,4	43,1
Елчĕк	27,1	48,5	33,2
Тăвай	46,1	64,4	30,3

«В. И. Ленинпа И. В. Сталин Разливра».
П. И. РОЗИН художник картини (ТАСС фотохроники).

Ленин кунĕсем умĕн

Разлив кÿлли патĕнче

СЕСТРОРЕЦК, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Чугун çул çинчи Тарховка ятлă станцирен Разлив кÿлли патне каякан шоссе çулĕ пуçланнă тĕлте В. И. Ленин скульптури курăнса тăрать. Скульптура аслă çулпуç кÿлĕ хĕрринчи хÿшĕре ĕçленине кăтартса парать...

1917 çулта кÿлĕ тавра шурлăх пулнă, чăтлăх вăрман ÿснĕ, унта иртсе çÿреме те май пулман. Станцирен кÿлĕ патне кимĕпе каймалла пулнă. Парти хăйĕн çулпуçне çакăнта вăрттăн усранă, ăна контрреволюцилле вăхăтлăх правительство ярса плессинчен хăтарнă. В. И. Ленин 1917 çулхи июльпе август уйăхĕсенче йывăç тураттисенчен тунă хÿшĕре пурăннă. Ун патне И. В. Сталин пырса çÿренĕ.

В. И. Ленин пурăннă хÿшĕ пулнă уçланкăра халĕ памятник лартнă. Ку памятник—Владимир Ильич пурăннă хÿшĕ мĕнле пулнине кăтартса парать. Кунтах пысăк мар павильон пур. Павильона 1917 çулхи революцилле ĕçсене кăтартса паракан материалсене пухнă.

Разлив кÿлли патĕнчи историлле вырăн—ĕççыннисем хисеплесе пуранакан вырăн пулса тăчĕ. Иртнĕ çулта ку вырăна 115.000 çын килсе курнă. Халĕ, В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул çитес умĕнхи кунсенче, шоссе çулĕпе автомобильсем уйрăмах нумай çÿреççĕ. Кунта Ленинградран экскурсантсем килеççĕ. Кÿлĕ патне йĕлтĕрпе çÿрекен çамрăксем те нумай.

В. И. Ленин çуралнă хулара

УЛЬЯНОВСК, январĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). В. И. Ленинăн Ульяновск хулинчи музей-суртне тата çак суртпа юнашарах вырнаçнă В. И. Ленинăн Тĕп музейĕн филиалне кашни кунах çĕршер çын пырса курать. Курма пыракансем В. И. Ленин 1887 çулччен пурăннă суртпа, çак суртри япаласемпе, çавăн пекех В. И. Ленинăн Тĕп музейĕн филиалĕнчи питĕ нумай экспонатсемпе паллашаççĕ, лекцисем итлеççĕ.

Музей-сурта уçăранпа тата каярахпа В. И. Ленинăн Тĕп музейĕн Ульяновскри филиалне уçăранпа пĕр миллион çын ытла пырса курнă. В. И. Ленинăн музей-суртне пырса курнă çынсем çырса хăварни 13 кĕнеке пулса тăнă. Çак кĕнекесенче çырса хунисем пирĕн халăх большевиксен партийĕпе Совет государствине организациленĕ генилле çулпуçа чунтанчĕререн юратнине кăтартса параççĕ.

«Ульяновск хулинче В. И. Ленинăн сурт-музейне уçнăшăн эпир хамăрăн правительствăна чунтан тав тăватпăр», —çапла çырса хăварнă рабочисен пĕр ушкăнĕ.

Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем çапла çырнă. «Ленинпа Сталин пире телейлĕ пурнăç тумалли тĕрĕс çул кăтартса пачĕç, Ленин халаласа хăварнисене ырă кăмăлпа пурнăçласа пырăпăр, ялта коллективизаци ĕçне çирĕплетсе пырăпăр».

«Эпир Сталин ертсе пынипе вăя шеллемесĕр ĕçлĕпĕр, хамăрăн социализмлă индустрие туса хурăпăр»,—çапла çырса хăварнă пĕрремĕш сталинла пилĕкçуллăх вăхăтĕнче музея пырса курнă нумай çынсем.

В. И. Ленин çурт-музейне Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче пырса курнă çынсем çапла çыраççĕ: «Аслă Ленин пире вĕрентнĕ тăрăх, Сталин пире вĕрентсе пынă тăрăх кĕрешсе тăшмана çапа-çапа хуçăпăр».

1952 çулхи январьте çапла çырнă:

«Сталин çул кăтартса пынипе совет халăхĕ Ленин хушса хăварнисене пурнăçласа пырать—хамăр çĕршывра коммунизм тăвать».

Çĕршыври хуласемпе ялсенче

Пĕтĕм Совет Союзĕнчи хуласемпе ялсенче ĕççыннисем Ленин кунĕсене хатĕрленеççĕ.

Киевра, Украина ССР-ĕнчи государство библиотекинче, литература выставки уçăлнă. Выставкăри нумай материалсемпе документсем В. И. Ленин большевиксен партийĕпе Совет государствин организаторĕ тата руководителĕ пулса ĕçленине кăтартса параççĕ, пролетарилле революцин генийĕсем В. И. Ленинпа И. В. Сталин туслă пулса ĕçленине кăтартаççĕ.

Кишиневри партипе комсомол организацийĕсем докладчиксем нумай уйăрнă, вĕсем ĕççыннисене пĕтĕм тĕнчери пролетариатăн аслă çулпуçĕн пурнăçĕпе революцилле ĕçĕсем çинчен каласа параççĕ. Хулари заводсемпе фабрикăсенче çĕршер агитаторсем Владимир Ильич Ленин çинчен калаçусем иртереççĕ.

Таджикистанри кинотеатрсенче аслă Ленин çинчен ÿкернĕ кинокартинăсене кăтартмалли фестиваль пуçланнă. Ĕççыннисем «Ленин в Октябре», «Ленин в 1918 году», «Великое зарево», «Человек с ружьем» кинокартинăсене кураççĕ.

Киргиз ССР-ĕнче Ленин çинчен ÿкернĕ картинăсене киргиз чĕлхи çине куçарнă. Фрунзе хулинчи кинопередвижкăсем Кыштаки ятлă çÿлĕ сăрт çинче пурăнакансем патне тата Киргизири аулсене кинокартинăсем кăтартма тухса кайнă.

Махач-Калари парти вĕрентĕвĕн суртĕнче пропагандистсемпе агитаторсем валли «28 çул Ленинсăр, Сталин юлташ ертсе пынипе—Ленин çулĕпе» темăпа доклад иртернĕ. Махач-Калари Ленински районти агитаторсем 500 çын ытла ĕççыннисен аслă çулпуçĕн пурнăçĕпе революцилле ĕçĕсем çинчен калаçусем иртереççĕ.

Орел, Якутск, Каховка, Саранск, Кривой Рог, Усть-Каменогорск, Псков, Ставрополь, Челябинск, Черновицы хулисенче тата ытти мĕнпур хуласемпе ялсенче те Ленин кунĕсене хатĕрленеççĕ. (ТАСС).

Искусствăпа литература произведенийĕсемшĕн Сталинла премисем парас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетра

Январĕн 12-мĕшĕнче, А. А. Фадеев председатель пулса ертсе пынипе, искусствăпа литература произведенийĕсемшĕн Сталинла премисем парас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн пĕрлехи черетлĕ ларăвĕ пулнă. Ларура 1951 çулта Сталинла преми илме тăратнă проза, поэзи, драматурги произведенийĕсене, çавăн пекех литература критикипе искусствоведени произведенийĕсене сÿтсе явнă.

Асăннă произведенисем çинчен Н. С. Тихонов, П. У. Бровка, Б. А. Лавренев, Д. Д. Благой каланă.

Комитета мĕн пурĕ 200 кĕнеке ытла ярса панă. Произведенисем хушшинче халăхсен вăхăтри темăпа çырнисем чылай. Романсем, повĕçсем, калавсем, вăвăсем пуххисем Совет çĕршывĕнчи пурнăçа, Совет Союзĕнчи халăхсем миршĕн, хамăр çĕршывра коммунизм тăвассишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешнине кăтартса параççĕ. Комитета союзлă республикăсенчи писательсен произведенийĕсене те нумай ярса панă. (ТАСС).

* * *

Январĕн 15-мĕшĕнче искусствăпа литература произведенийĕсемшĕн Сталинла премисем парас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн пĕрлехи черетлĕ ларăвĕ пулнă.

Пĕрлехи ларура кино тата музыка произведенийĕсене сÿтсе явнă.

* * *

Январĕн 16-мĕшĕнче искусствăпа литература произведенийĕсемшĕн Сталинла премисем парас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн пĕрлехи черетлĕ ларăвĕ пулнă. Ларура живопись, скульптура, графика произведенийĕсене сÿтсе явнă. Комитет членĕсем 1951 çулхи Пĕтĕм Союзри художество выставкине пăхса тухнă.

Д. Шмаринов, В. Кеменов, Б. Иогансон Сталинла премисем парас тĕлĕшпе ĕçлекен комитета тăратнă произведенисем çинчен каласа панă. Произведенисен тематики питĕ пысăк. Илемлĕ картинăсем, ÿкерчĕксем, плакатсем, скульптурăллă портретсем нумай, вĕсем совет çыннисен ĕçри паттăрлăхне, миршĕн активлă кĕрешнине кăтартса параççĕ. Çавăн пекех вырăс культурин питĕ паллă деятелĕсен памятникĕсем валли тунă скульптурăсем те пур. (ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Йышăннă решенисене куллен пурнăçламалла

ВКП(б) Вăрнар райкомĕ районти парторганизацисене воспитани ĕçне лайăххатлас тĕлĕшпе тăрăшмасть теме çук. Çамрăк коммунистсене большевикла воспитани парас ĕçе лайăххатласси çинчен пуçламăш парторганизаци секретарĕсен семинарĕнче сÿтсе явнă, секретарьсене ку тĕлĕшпе пĕр-пĕрин опычĕсемпе паллаштарнă. Райкомăн ответлă работникĕсем час-часах пуçламăш парторганизацисенче пулса коммунистсене уйрăммăн калаçаççĕ, вĕсене лекцисемпе докладсем туса параççĕ. Кăçал пур коммунистсене те парти вĕренĕвне хутшăнтарнă. 1951 çулта районта 39 çынна ВКП(б) членĕн кандидатне тата 33 кандидата парти членне илнĕ.

Çав вăхăтрах партие илес тата коммунистсене большевикла воспитани парас ĕçре пысăк ситменлĕхсем пур-ха. Парти райкомĕн иртнĕ пленумĕ пуçламăш парторганизацисемпе райком воспитани ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе йышăннă решенисене тивĕçлипе пурнăçламаннине кăтартса пачĕ.

Районти парторганизацин пысăкрах пайĕ çамрăк коммунистсенчен тăни большевикла воспитани ĕçне ытларах вăйлатса пыма хушать. Анчах чылай пуçламăш парторганизацисенче коммунистсене партилле ĕçе хутшăнтарассине кирлĕ пек хаклаççĕ. «Правда», Калинин ячĕпе тăракан, «Броневик», «Авангард» колхозсенчи тата МТС-ри парторганизацисенче çамрăк коммунистсене большевикла воспитани парас ĕçе ытла та начар йĕркеленĕ. Сăмахран, Калинин ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци ВКП(б) членĕн кандидачĕсем Петухов, Антонов, Егоров, Андреев тата ытти юлташсем, пурĕ çичĕ çын, чылайранпа кандидатра тăраççĕ. Парторг секретарĕ Андреева юлташ вĕсене парти членне куçарма хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлемест, коммунистсене партилле ĕçе хутшăнтарма тăрăшмасть. Парторганизаци кандидатсене сайра-хутра кăна поручени парать. Коммунистсем поручени мĕнле пурнăçланине тĕрĕслемест. Воспитани ĕçне çителĕксĕр туса пынипе пула ĕнтĕ уйрăм коммунистсем ĕç дисциплинине пăсаççĕ. Парторганизаци йышăннă решенисене пурнăçлама тăрăшмасть. Кун пек тĕслĕхсем ытти парторганизацисенче те пур.

ВКП(б) райкомĕ уйрăмах шкулти парторганизацисене сахал пулăшать. Шăхальти вăтам шкул директорĕ Никитин, Хоруйĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулти учитель Никифоров, Пинерти çичĕ çул вĕренмелли шкул директорĕ Ананьев юлташсем йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлса кайнă. Çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕçре парти пухăвĕсене вăхăтра пĕр илтĕ тĕлĕшĕнчен çÿлĕ пусăма пуçтарни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Анчах Жданов ячĕпе тăракан тата ытти хăшпĕр колхозсенчи, райпотребсоюзри пуçламăш парторганизацисенче пухусене вăхăтра ирттермеççĕ. Чылай парторганизацисенче шалти ĕçсем çинчен сахал сÿтсе яваççĕ.

Райком иртнĕ çулта çамрăк коммунистсемпе парти кандидачĕсен районти пухăвне ирттернĕ. Пуху идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çителĕксĕр пусăма иртнĕ.

Партие илес тата çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕçе ыйтăва райком бюровĕн ларăвĕсене, пленумсене парти активĕн пухăвĕсене час-часах сÿтсе яваççĕ. Районти парторганизаци иртнĕ конференцийĕнче те кун пирки тивĕçлĕ решенисем йышăннă. Анчах пуçламăш парторганизацисемпе райком ку тĕлĕшпе йышăннă решенисене пурнăçласа сахал тăрăшаççĕ. Коммунистсене большевикла воспитани парас ĕç районта çителĕксĕр пулса пырать.

И. ВОЛКОВ.

Коммунистсен активлăхне ÿстеретпĕр

Производствăри ĕçсем ăнăçлă пуласси парторганизаци кĕрешÿри пултарулăхĕнчен нумай килет. Çавăнпа та эпир колхозниксем хушшинче парторганизаци влиянине ÿстерес çине пыма тăрăшатпăр.

Уй-хир бригадисенче, выльăх-чĕрлĕх фермисенче парти е партипе комсомол групписем тунă. Вĕсен ĕçне партбюро ертсе пырать. Партгруппăсем туни парторганизацие партире тăман активпа тачăрах сыхăнма, массăсене хăйĕн тавра пĕтĕçтерме май парать.

Партгруппăсем колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă тата организаци ĕçне туса пыраççĕ. Ялхуçалăх ĕçĕсен хĕрÿллĕ тапхăрĕсенче, сăмахран, çуракинче, тырпула хиртен пухса кĕртнĕ тата государствăна тырă панă вăхăтра бригадăри партгруппăсенчи коммунистсем колхозниксем хушшинче тĕтăшах калаçусем ирттерчĕç, колхозниксене хаçатсем вуласа пачĕç, боевой листоксем кăларса тăчĕç.

Парторганизаци авторитечĕ пĕрмай ÿссе пырать. Артель членĕсем коммунистсене ответлă ĕçсем шанса параççĕ. 28 коммунистран 19 юлташ колхозри пысăк ĕçсене туса пыраççĕ. Н. Петров коммунист колхоз председателĕ, С. Филиппов юлташ ветеринари фельдшерĕ, Васильев юлташ ферма заведующийĕ, Н. Корнилов хурт-хăмăр ăсти, В. Алексеев юлташ тимĕрçĕ.

Коммунистсене колхоз ĕçне активлă хутшăнтарас ĕçре парти пухăвĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Парторганизаци час-часах колхоз хуçалăхĕнчи паллă ыйтусене сÿтсе явать. Пирĕн колхозра, сăмахран, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата ÿнăм тухăçлăхне ÿстерес ĕç çителĕксĕр пулса пыратчĕ. Çак ыйтăва атарласа парти пухăвĕнче сÿтсе явса, правление кирлĕ сĕнÿсем патăмăр. Правлени фермăсене пыма опытлă çынсене уйăрса лартрĕ. Халĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе пирĕн колхоз районта иккĕмĕш вырăн йышăнать. Парторганизаци решенийĕсене пурнăçласа, 1951 çулта витесене тĕпрен юсанă, урайсене цементран тунă.

Парторганизаци колхоз хуçалăхне пур енчен те аталантарас тĕлĕшпе сахал мар ĕç турĕ. Коммунистсен пуçарăвĕпе колхозра сад, хăмла, хурт-хăмăр ĕрчетес ĕç, кирпĕч производстви сарăлса пырать. Сад лаптăкне ÿстерме колхоз питомник хывнă. Унта 7.200 çамрăк улмуççи ÿсет, вĕсенчен 5 пин тĕпне сыпнă. Кăçал колхозниксем 70 пин паха кирпĕч турĕç. Малашне пирĕн пĕтĕм выльăх-чĕрлĕх вити кирпĕчрен пулмалла.

Коммунистсен политикăллă активлăхне ÿстерес ĕçре вĕсене идея тĕлĕшĕнчен ытларах хĕçпăшаллантарни нумай пулăшать. Парторганизаци çумĕнче ВКП(б) историне вĕренмелли кружок ĕçлет. Унсăр пуçне коммунистсем виçĕ çуллăх курссенче агротехникăна вĕренеççĕ.

Парторганизаци тивĕçĕ—колхоза çĕнĕрен çĕнĕ ÿсĕмсем тума пулăшасси, çапла вара колхозниксен пурнăçне тата та пуян, культурăллă тăвасси. Çак тивĕçе пурнăçлас тесе эпир коммунистсен активлăхне ÿстерсе пыратпăр, партире тăман активпа сыхăнса ĕçлетпĕр.

В. ФЕДОТОВ,
Хрущев ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци секретарĕ.
Вăрнар районĕ.

Парти вĕренĕвне ертсе пырассине вăйлатмалла

(Пропагандист çырăвĕ)

Пĕпрес районĕнчи «Спотара» заводри коммунистсем тата партире тăман актив «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсем тăрăх пĕрремĕш çул вĕренеççĕ.

План тăрăх çак вăхăт тĕлне кружокра 16 занятие ирттермеллеччĕ, анчах та эпир паянхи куна 12 занятие кăна ирттертĕмĕр.

Мĕнре-ха сăлтавĕ? Калас пулать, пуçламăш парторганизаци (секретарĕ Волков юлташ) кружок ĕçĕпе пачах интересленмест. Çавна пула хăшпĕр коммунистсем вĕренме пăрахрĕç. Акă, П. Григорьев, З. Афиногенов, О. Долгова коммунистсем занятисене сайра-хутра кăна çÿреççĕ. П. Григорьевпа З. Афиногенов юлташсем мĕн пурĕ те икĕ занятире кăна пулнă, Багаутдинов коммунист ку таранччен пĕр занятире те пулман.

Занятисем вăхăтра тата йĕркеллĕ пулманни çинчен парторганизаци секретарĕ Волков юлташ лайăх пĕлет. Ку пирки парти пухăвĕнче сÿтсе явма кирли çинчен те темиçе хутчен те каланă. Анчах усси çук. Волков юлташ пурнăçа парти решенийĕсене интереслеменни. Çавăнпа та кружок занятийĕсем час-часах пулмаççĕ.

Парторганизаци партиллĕ-организацилле ытти ĕçсене те япăхтарчĕ. Пухусем вăхăтра пулса иртмеççĕ. Юлашки 6 уйăх хушшинче пĕр пуху кăна ирттернĕ.

Заводра политикăллă-массăллă ĕç япăх пулса пырать. Кунта рабочисемпе работницăсем хушшинче агитацилле-массăллă ĕçе вăйлатма пур условисем те çителĕклĕ. Поселокра ачасен садĕ, ясли, клуб тата çичĕ çул вĕренмелли шкул пур. Вĕсенче ĕçлекен служащисене парторганизаци агитацилле-массăллă ĕçе çителĕксĕр хутшăнтарать.

ВКП(б) Пĕпрес райкомĕ парторганизацин ĕçĕнчи ситменлĕхсене лайăх пĕлсе тăрать. Анчах ĕçе лайăхлатма сахал пулăшать.

Кружокăн ĕçр занятийĕнче ВКП(б) райкомĕн пропаганда тата агитаци пайĕн заведующийĕ М. Дмитриев юлташ пулчĕ. Ун чух те чылай коммунистсем занятие пымарĕç. Анчах Дмитриев юлташ коммунистсен идейăллă-политикăллă вĕренĕвне лайăхлатас тĕлĕшпе парторганизацие пулăшу памарĕ.

Г. РУСАНОВ,
«ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренмелли кружок руководителĕ.

Большевизм историйĕнчи паллă тапхăр

(Партин Прагăри конференцийĕ уçăлни 40 çул çитнĕ кун тĕлне)

Хĕрĕх çул каялла, 1912 çулхи январĕн 18-мĕшĕнче, Прага хулинче партин Пĕтĕм Российăри VI-мĕш конференцийĕ уçăлнă. Çакă вăл вырăссен тата пĕтĕм тĕнчери рабочи юхăмĕн историйĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулнă. Прагăри конференци меньшевиксене партирен хуса кăларса Российăри большевикла организацисене пĕрлĕхлĕ, большевикла партие, оппортунизмпа килĕшме пултарайман, малта пыракан марксистла теорипе хĕçпăшалланнă партие пĕрлештернĕ.

Прагăри конференци çĕнĕ сăнарлă партин, ленинизм партийĕн, большевиксен партийĕн никĕсне хывнă. Ленин—Сталинăн аслă партийĕ вырăссен тата тĕнчери рабочи класăн чи лайăх пахалăхĕсемпе традицийĕсене пĕтĕçтерсе тăрать. Большевиксен партийĕ вăл—пирĕн самана ăсĕ, чысĕ, совеçĕ, чăн-чăн революцилле партишĕн, социализмлă революципе пролетариат диктатури партийĕшĕн тăракансемшĕн чи лайăх тĕслĕх пулса тăрать.

Ĕçсыннисен аслă çулпуçĕсем В. И. Ленинпа И. В. Сталин большевиксен партине туса хунă, вĕсем пĕрле ĕçлесе большевизмăн идеологиллĕ, организациллĕ, тактикăллă тата теориллĕ никĕсĕсене хывнă, партие ĕçсыннисен ирĕклĕхĕшĕн пыракан кĕрешÿре туптаса çирĕплетнĕ, ăна тĕнчери чи хăватлă та революциллĕ парти туса хунă.

Большевиксен партийĕ ертсе пынипе Российăри ĕçсыннисем этемлĕх историйĕнче пирвайхи хут помещиксемпе капиталистсен власне сирпĕнтерсе антарнă, Совет государстви туса хунă, пирĕн çĕршывра социализм туса çитернĕ. Большевиксен партийĕ совет халăхĕн пĕтĕм тĕнчипе историллĕ çĕнтерĕвĕсен хавхалантаракан тата организаторĕ. Большевиксен партийĕ, аслă Сталин ертсе пынипе совет халăхĕ шанчăклăн коммунизм патне пырать.

I.

Прагăри конференци Ленинпа Сталин Российăра рабочисен революциллĕ партине тăвассишĕн кивĕ «Искра» вăхăтĕнчен пуçласа паттăррăн кĕрешнĕ ĕçе вĕçлесе çитернĕ. Большевиксем «экономистсене», меньшевиксене, троцкистсене, отзовистсене, мĕнпур йышши идеалистсене хирĕç кĕрешнĕ пĕтĕм истори вăл—çĕнĕ сăнарлă партие хатĕрленĕ истори пулнă.

Большевиксем хăйсене уйрăм партие пĕрлешессипе ăраснах Российăри пĕрремĕш революци поражени тÿснĕ хыççăн кирлĕ пулнă. Çак тапхăрта меньшевиксем тÿрех сулăнчăк çулĕ çине, партин революциллĕ программипе лозунгĕсенчен пăрăнас намăслă çул çине тăнă. Меньшевиксем вăрттăн ĕçлекен марксистла партие пĕтерессишĕн пулнă, вĕсем хăйсен реформистла партине организацилеме тăрăшнă. Çак партие рабочисем «столыпинла рабочи партин» тесе ят панă.

Партие отзовистсем те пысăк сиен кÿнĕ, вĕсем ирĕклĕ майсемпе усă курассине хирĕç пулнă, рабочи депутатсене государство думинчен каялла чĕнсе илессишĕн тăнă. Отзовистсем большевиксен ретĕнче вак буржуаллă попутчиксем пулнă. Вĕсем партие массăран уйăрассишĕн тăнă, революциллĕ çĕнĕ çĕкленÿ валли вăйсене организацилеме кансĕрленĕ.

Ликвидаторсемпе тата отзовистсемпе пĕрле партие хирĕç Троцкий сăтăрла ĕç туса пынă. 1912 çулта Троцкий большевизма хирĕçле мĕнпур ушкăнсемпе юхăмсене Ленина хирĕç, большевиксен партине хирĕç пыракан августовски блока пĕрлештернĕ.

Меньшевиксем сутăнчăк ĕç тунă пирки большевиксен пур-пĕрех вĕсенчен уйăрла каймалла пулнă. Большевиксем малашне те меньшевиксемпе пĕр партире тăрасси, тесе кăтартать Сталин юлташ, çапла ĕнтĕ, рабочи класпа революци ĕçне сутассипе пĕрех пулнă. Большевиксем хăйсем умне меньшевиксенчен уйăрăлас тĕллев çеç мар, тата, çĕнĕ парти, çĕнĕ сăнарлă парти, Хĕвеланăç Европăри социал-демократла партисенчен тĕпрен уйрăлса тăракан парти тăвас тĕллев тытнă.

Энгельс вилнĕ хыççăн Европăри социал-демократла партисем улшăнса реформистла партисем пулса пыма пуçланă, вĕсем марксистла тата оппортунистла элементсем пĕрле хутшăнса кайнă ушкăн пулса тăнă. Çак партисем парламентри хăйсен фракцийĕсен хÿрешкисем, буржуазин рабочи юхăмĕнчи агентури пулса тăнă. Хĕвеланăç Европăри социал-демократи марксизм ялавĕне принципĕсене сутнă. Вăл рабочи класа революци патне илсе пыма пултарайман.

Оппортунистсемпе ним килĕшми тата буржуази тĕлĕшпе революциллĕ парти, социальнăй революципе пролетариат партийĕ туса хурассишĕн большевиксем пĕтĕм вăя хурса кĕрешнĕ. Ленинпа Сталин оппортунистсене хирĕç хаярран кĕрешнĕ, вĕсене хăйсен речĕсенче татăклăнах çĕмĕрсе тăкнă.

Çĕршывра революциллĕ юхăм чакса пынă тата ĕçсыннисем ывăннă условисенче большевиксем тактикăна улăштарнă, патша йĕркине хирĕç уççăн кĕрешессинчен ытти майсемпе кĕрешес, уçă майсемпе усă курас çул çине тăнă. Столыпинла реакци çулĕсенче большевиксем ывăнма пĕлмесĕр хăйсен вăйĕсене пĕтĕçтернĕ, массăпа çыхăну тытассине вăйлатнă, вĕсене çĕнĕ революциллĕ çĕкленĕве хатĕрленĕ. Хаяр терропа репресисем пулнă вăхăтра, парти ăшĕнче оппортунистсем сутăннă вăхăтра большевиксем кăна Российăри революциллĕ социал-демократи ялавне çÿлте тытса пынă, парти программине тата лозунгĕсене тĕрĕс пурнăçласа пынă.

II.

Большевиксем, Ленинпа Сталин ертсе пынипе, конференци умĕн партин революциллĕ вăйĕсене, пĕтĕçтерес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. 1910 çултах «Социал-демократ» хаçатăн 11-мĕш номерĕнче пичетленнĕ статьяра Сталин юлташ партишĕн кĕрешес ĕçре Ленин майлă, Ленин çул-йĕрĕ майлă тăнă. Вăл партин черетри задачи—парти конференцине пухасси, партин уççăн тухакан хаçачĕсене кăларасси, Российăра партин вăрттăн ĕçлекен практикăллă центрне туса хурасси пулать, тесе шутланă. Сталин юлташăн çакă ĕнĕвĕсем каярахпа Прагăри конференци решенийĕсен тĕп никĕсне кĕрсе юлнă.

Прагăри конференцире партин 20 ытла организацийĕнчен представительсем пулнă, çавăнпа та вăл формально партин съезчĕ вырăнĕнчех пулнă. Конференцин пĕтĕм ĕçĕсене В. И. Ленин ертсе пынă. Вăл ларусен председателĕ пулнă, тĕп ыйтусем тăрăх докладсем тунă, кун йĕркинче тăракан паллă ыйтусем тăрăх резолюцисем çырса хатĕрленĕ. Ку вăхăтра Сталин юлташ Вологдăри ссылкăра пулнă.

Хăйĕн решенийĕсенче конференци Российăра рабочи юхăм çĕнĕрен çĕкленме пуçланине, вырăнти парти организацийĕсем хăйсен ĕçне вăйлатма пуçланине палăртнă. Ку вăхăтра парти организацийĕсем пур çĕрте те, большевиксен тактики тăрăх, вăрттăн ĕçе уççăн ĕçлекен обществăсемпе союзсен ĕçĕсемпе сыхăнтарнă.

Конференци ятарласа 4-мĕш государство думине рабочи курисем тăрăх социал-демократсен кандидачĕсене тăратасси çинчен тата 4-мĕш государство думинче социал-демократла фракци туса хурасси çинчен решени йышăннă. Çак фракци РСДРП Центральнăй Комитетне пăхăнса ĕçлемелле пулнă. Суйлав кампанийĕне думăри фракци ĕçĕнче тăракан тĕп задача вăл—социализмла класлă пропаганда сарасси тата рабочи класа организацилесси пулнă.

Прагăри конференци умра тăракан политикăллă тĕп задачăсен вырăнне хурса программа-минимум кăларса тăратнă: демократиллĕ республика, 8 сехетлĕ ĕç кунĕ, помещиксен мĕнпур çĕрĕсене конфискацилесси. Большевиксем 4-мĕш государство думине суйлас ĕçе çак лозунгсемпе хутшăннă, 1912—1914 çулсенчи революциллĕ юхăмăн çĕнĕ çĕкленĕвне çак лозунгсем тăрăх ертсе пынă.

Хăйĕн решенийĕсенче Прагăри конференци патша йĕркин захватчикла политикине питленĕ, Англири либераллă правительствăна, патша самодержавин тискер ĕçĕсене хутшăннăскерне, тăрă шыв çине кăларнă. Конференци Китайри революциллĕ юхăмăн çитĕнĕвĕсене саламланă, Китай халăхĕн революциллĕ кĕрешĕвĕн пĕтĕм тĕнчери пĕлтерĕшне палăртнă, вăл Азири халăхсене çăлăнăç кÿрет. Европăри буржуази пуç пулса тăрассине хавшатать, тесе палăртнă.

Прагăри конференци йышăннă паллă решенисенчен пĕри вăл—меньшевиксене партирен хуса кăларасси çинчен йышăннă решени пулнă. Ленин çырнă тăрăх конференци «РСДРП ликвидаторсене хирĕç тăвата çул кĕрешнĕ ĕçе вĕçлесе çитернĕ» (Сочиненисем. 17 т., 479 стр.).

Прагăри конференци Ленин сĕннĕ тăрăх йышăннă резолюцире ликвидаторсен ушкăнĕ «хăйне татăклăнах парти тулашне тăратрĕ», тенĕ. Конференци партин мĕнпур членĕсене ликвидаторсене хирĕç кĕрешме, вăл рабочи класа ирĕке кăларас ĕçшĕн сиенлĕ пулнине ăнлантарса пама, РСДРП-на тепĕр хут ура çине тăратса тĕреклетессишĕн вăй хурса кĕрешме чĕннĕ.

Большевиксем меньшевиксемпе пĕр партире тăвине пĕтерес Прагăри конференци большевикла Центральнăй Комитет суйланă. Унта Ленин, Сталин, Орджоникидзе, Свердлов, Спандарьян тата ыттисем кĕнĕ. ЦК членĕ кандидачĕ пулма М. И. Калинина суйланă. И. В. Сталин тата Я. М. Свердлов вăл вăхăтра ссылкăра пулнă, çавăнпа та вĕсене хăйсемсĕр суйланă. Российăра революциллĕ юхăма ертсе пыма практикăллă центр—ЦК-ăн Вырăс бюровне туса хунă. В. И. Ленин сĕннипе ăна Сталин юлташ ертсе пынă. Конференци «Правда» хаçат кăларасси çинчен решени йышăннă.

Ленин 1912 çул пуçламăшĕнче Горький патне Прагăри конференци итогĕсем çинчен çапла çырса пĕлтернĕ:

«Тинех, ликвидаторла сволочсем хирĕç тăнине пăхмасăр, партине унăн Центральнăй Комитетне çĕнĕрен туса хума пултартăмăр» (Сочиненисем. 35 т., 1 стр.).

В. И. Ленин хушнипе Г. К. Орджоникидзе Сталин юлташ патне Вологдăна тухса кайнă, унта вăл ăна Прагăри конференци решенийĕсем çинчен пĕлтернĕ. 1912 çулхи февраль уйăхĕнче Сталин юлташ ссылкăран тарнă, кĕске вăхăт хушшинчех пысăк ĕç пуçарса янă. Центральнăй Комитет хушнипе Сталин юлташ çĕршывăн паллă районĕсенче пулнă, парти организацийĕсене конференци решенийĕсене пурнăçлама мобилизацилеnĕ, Лена прискинчи рабочисене персе пăрахнине хирĕç протестлесе забастовкăсем ирттернĕ вăхăтра большевиксен Петербургра эрнере пĕрре тухса тăракан «Звезда» хаçатне ертсе пынă. Сталин юлташ большевиксен 4-мĕш государство думине хатĕрленес ĕçне ертсе пынă. В. И. Ленин кăтартса панипе, Сталин юлташ пуçарнипе большевиксен кашни кун тухакан массăллă «Правда» хаçатне туса хунă.

1912 çулхи март уйăхĕн пуçламăшĕнче çырнă «Партишĕн!» ятлă листовкăра, ăна В. И. Ленин чĕререн ырланă, Сталин юлташ большевиксен вăрттăн ĕçлекен партине сыхласа хăварма тата тĕреклетме кирли çинчен калакан идейăна пур енчен те аталантарнă, Прагăри конференци питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулнине, вăл Российăра революциллĕ юхăм ÿсни çинчен тата парти чĕрĕлсе тăни çинчен калакан ĕç пулнине кăтартса панă. Политикăллă выступленисем, демонстрацисем, забастовкăсем организацилеме чĕнсе, Сталин юлташ çапла çырнă: «Çĕршыва чухăнлăхпа деморализацирен хăтарса хăвармалла! Анчах çаксене патша йĕрки çуртне аялтан пуçласа çÿле çитиччен йăтăнтарса антармасăр тума пулать-и-ха? Истори йышăннă çулпуçĕ—социализмла пролетариат ертсе пыракан халăхăн революциллĕ анлă юхăмĕсĕр патша правительствине унăн мĕнпур крепостникла юлашкисене мĕнле сирпĕнтерсе яма пултарăр-ха?.. («Сочиненисем. 1 т., 215 стр.).

Вырăнсенчи парти организацийĕсем тата рабочисен анлă массисем Прагăри конференци ликвидатор-меньшевиксене партирен кăлармалла тунă решенисене чĕререн ырласа йышăннă. Прагăри конференци решенийĕсене пурнăçласа большевиксем революциллĕ çĕнĕ çĕкленÿ çулĕсенче партин вăрттăн ĕçне уççăн ĕçĕпе сыхăнтарса пынă, хăйсен речĕсене пĕтĕçтернĕ, рабочи класпа парти хушшинчи сыхăнăва вăйлатнă.

III.

Прагăри конференци революциллĕ марксистла-ленинла парти, рабочи класа власçшăн кĕрешĕве илсе пыма çителĕклĕ таран хăюллă, политикăллă лару-тăрăвăн йывăр условийĕсен тупсăмне пĕлме çителĕклĕ таран опытлă, тĕллев патне çитмелли çул çинче тĕл пулакан шыв айĕнчи чулсем патĕнчен пăрăнса иртме пултаракан парти туса хунă. Çакăн пек партисĕр Российăра капитализма сирпĕтсе антарасси çинчен, пролетариат диктатурине кĕрешсе илесси çинчен ĕмĕтленме те пулман. «Пролетариллĕ партие оппортунистсенчен, меньшевиксенчен тасатни,—тесе кăтартать Сталин юлташ,—ăна Прагăри конференци пурнăçа кĕртнĕ,—партипе революцие малалла аталантарассишĕн пысăк та татăклă вырăн йышăнса тăнă, большевиксем рабочи класс ĕçне сутакансене, соглашатель-меньшевиксене партирен хăваласа кăларман пулсан, пролетариллĕ парти 1917 çулта пролетариат диктатурине кĕрешсе илмешкĕн массăсене çĕклеме пултарайман пулнă пулĕччĕ» (ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ, 139 стр.).

Октябрьти революцие пĕр парти, большевиксен партийĕ, хăйĕн пĕтĕçÿлĕхĕпе тата хурçă пек çирĕп дисциплинипе вăйлă парти ертсе пынипе туса ирттернĕ.

Ленин—Сталин партийĕ Совет государствине ертсе тата çул кăтартса пыракан вăй пулса тăнă хыççăн, ленинизмăн мĕнпур тăшманĕсене хирĕç, пирĕн çĕршывра тепĕр хут капитализм йĕркисем туса хума тăрăшнă партисене хирĕç ывăнма пĕлмесĕр кĕрешнĕ.

Сталин юлташ çапла вĕрентет: хамăрăн крепоçра сутăнчăксем ларнă чухне буржуазие хирĕç ăнăçлă кĕрешме çук, мĕншĕн тесен ку вăл хамăра фронтран та, тылран та тăшман персе тăмалла туни пулĕччĕ.

Истори çакна кăтартса пачĕ: троцкистсем, бухаринецсем, национал-уклонистсем пирĕн партире меньшевизм ĕçне малалла туса пыракансем пулнă. Çакнашкал капитулянтла ушкăнсене çĕмĕрсе тăкмасăр Совет Союзĕнче социализм тума, совет халăхне пролетариллĕ интернационализмăн аслă принципĕсем тăрăх воспитани пама пулман.

Парти хăйне оппортунистла элементсенчен, капитулянтсемпе сутăнчăксенчен тасатнипе тĕрекленет,—çакăнта ĕнтĕ çĕнĕ сăнарлă парти пулса тăракан большевиксен партийĕн чи кирлĕ принципĕсенчен пĕри. Çакă Ленинпа Сталин туса хатĕрленĕ питех те паха положени, большевизмăн пĕтĕм историйĕ çирĕплетсе панă положени коммунистсен партийĕсемпе рабочи партисемшĕн уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Социализмшăн, шпионсен, сăтăрçăсен, Тăван çĕршыва сутакансен троцкистла-бухаринла бандисене хирĕç çине тăрса кĕрешнипе большевиксен партийĕ рабочи класпа хресченсен союзне, социализмла нацисен тăванла туслăхĕпе пĕр-пĕрне пулăшассине туса хурса çирĕплетрĕ. Большевиксен партийĕ совет обществин мораллĕ-политикăллă пĕрлĕхне çирĕплетет, хăйĕн политикинче пирĕн пĕтĕм халăхăн пĕрлĕх ирĕкне, ĕçсынни массисен тĕп интересĕсене палăртса тăрать. Çавăнпа та Ленин—Сталин партине ĕçсынни массисем вĕçĕмсĕр шанса тăраççĕ, ăна пур майсемпе те пулăшаççĕ. «Пирĕн коммунистла парти пек хăватлă та авторитетлă парти тĕнчере урăх çук, пулман та» (Ленинизм ыйтăвĕсем, 11 кăларăм, 408 стр.).

Ленин—Сталин çĕнĕ сăнарлă парти çинчен вĕрентни коммунистла партисен сыхăлăхне ÿстерет, мĕнпур çĕршывсенчи коммунистсене сылтăм социалистсене тата Тито бандичĕсемпе шпионĕсене—Америкăпа Англи империалисчĕсенĕ, çĕнĕ вăрçă чĕртекенсене сутăннă агентурăна хирĕç кĕрешме идейăллă хăватлă хĕçпăшал парать.

Марксистла-ленинла вĕрентÿпе тата ВКП(б) опычĕпе усă курса, коммунистсен партийĕсемпе рабочи партийĕсем хăйсен речĕсенчи оппортунистла элементсене хаярран çĕмĕрсе пыраççĕ. Венгрире Ласло Райка йышши, Болгарире Трайчо Костов, Албанире Кочи Дзодзе, Чехословакире Швермова, Клементис, Славянский йышши сутăнчăксемпе шпионсене тăрă шыв çине кăларни, националистла элементсене хирĕç хаярран кĕрешни—çаксем вĕсем партисене тĕреклетме, вĕсемпе массăсем хушшинчи сыхăнăва çирĕплетме пулăшать.

* * *

Прагăри конференци пулнăранпа иртнĕ 40 çул хушшинче большевиксен партийĕ кĕрешÿпе çĕнтерÿсен мухтавлă та паттăр кун-çулне утса тухрĕ. Ленин—Сталин партийĕ пирĕн çĕршыври пролетариллĕ революцин çулпуçĕ, социализмлă общество тăвас ĕçе ертсе пыраканĕ пулнине тÿрре кăларчĕ. Вăрçă хыççăнхи тапхăрта большевиксен партийĕ совет халăхне коммунизм тăвас çулпа ертсе пырать. Хăйĕн тăван партийĕ хавхалантарса ертсе пынипе совет халăхĕ коммунизм обществин материально-техническии никĕсне хывать. Пирĕн çĕршыв кунтан-кун пуянрах та хăватлăрах пулса пырать. Гидроэлектростанцисемпе шăвармалли системăсем тăвасси истори курман хăвăртлăхсемпе пулса пырать. Совет халăхĕ сутçантăлăка улăштарса çĕнетмелли сталинла аслă программăна пурнăçлать. Ленин—Сталин партийĕ пирĕн халăха коммунистла воспитани парать, совет çыннисен ăс-тăлĕнчи капитализм юлашкисене, капитализмлă йĕри-тавралăх влиянийĕсене ăнăçлă пĕтерсе пырать.

Совет халăхĕ, герой-халăх, çĕнтерÿçĕ-халăх хăйĕн партине чĕререн юратать, ăна шанса тăрать. Ленин—Сталин политикинче совет стройĕн пурнăçлă никĕсне курать. Ленин—Сталин партийĕ рабочи класăн тăшманĕсене хирĕç хаярран кĕрешет, вăл халăх массипе тачăн сыхăнса тăрать. Ăна пĕтĕм тĕнчери çĕршер миллион ĕçсыннисем юратса хисеплеççĕ.

Ленин—Сталин идейисем, большевизм идейисем никам çĕнтереймен хăватлă, мĕншĕн тесен вĕсем тĕрĕс идейисем. Çак идейисем массăсем хушшине сарăлса материальнăй хăватлă вăй пулса тăчĕç. Ленинизм идейисем мĕнпур çĕршывсенчи ĕçсыннисене коммунизм патне пымалли çула çутатса тăраççĕ.

Ю. БОРИСОВ,
историллĕ наукăсен кандидачĕ.

Колхозсем валли кадрсем хатĕрлекен шкулта

Партипе правительство колхозсем валли кадрсем хатĕрлес ĕçе пысăк вырăна хураççĕ. Пĕрлешсе пысăкланнă колхоз хуçалăхне, учет ĕçне лайăх пĕлекен кадрсем уйрăмах кирлĕ. Колхозсем валли счетоводсем хатĕрлекен республикăри шкул çавăн пек кадрсем хатĕрлет те ĕнтĕ.

Çак шкул Куславкка районĕнчи Тĕрлемес ялĕнче вырнаçнă, Ăна 1947 çулта организациленĕ, унтанпа шкултан пурĕ 236 счетовод вĕренсе тухнă, вĕсенчен 133-шĕ хĕрарăмсем.

Шкулта пысăк квалификациллĕ преподавательсем ĕçлеççĕ. Шкул директорĕ М. Степанова юлташ преподаватель пулса 20 çул ĕçлет. Бухгалтер учечĕн преподавателĕ Е. Соловьева юлташ 19 çул хушши учитель пулса ĕçлет. Вĕсем хăйсен паха пĕлĕвне пулас специалистсене парассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Вĕренÿре теорипе практикăна сыхăнтарас ĕçе те лайăх туса пыраççĕ. Ку тĕлĕшпе колхозсенче практикăллă занятисем ирттереççĕ.

Вĕренекенсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе те лайăх организациленĕ, тăтăшах докладсемпе лекцисем пулаççĕ, тĕрлĕрен кружоксем ĕçлеççĕ.

В. ИГНАТЬЕВ.

Культурăллă пурнăç хроники

Экскурсире пулчĕç. Муркаш районĕнчи Чуманкассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулти пионерсем çак кунсенче Сталин ячĕпе тăракан колхозри гидроэлектростанцире пулчĕç. И. Мартынов электромеханик шкул ачисене турбина, генератор, трансформаторсем тата виçмелли приборсем мĕнле ĕçлени çинчен тĕплĕ каласа кăтартрĕ.

Радио кĕртрĕç. «Спотара» заводĕнче (Пĕпрес районĕ) радиоузел ĕçлет. Радиоузелра ĕçлекенсем çак кунсенче Мерчĕк вăрман участокĕнчи рабочисен килĕсене радио кĕртсе пачĕç. Халĕ вăрманта ĕçлекен кадровăй рабочисем кашни кунах Мускавран тата Шупашкартан паракан передачăсене итлеççĕ.

Кино кăтартаççĕ. Чăваш педагогика институтĕнчи профсоюз месткомĕ студентсем валли час-часах кино кăтартассине организацилет. Çак кунсенче студентсем институтра «Последний табор» ятлă кинофильм курчĕç.

Сталин юлташ умĕнче йышăннă обязательствăсене чыслă пурнăçлассишĕн

ВКП(б) райком секретарĕсемпе райсовет исполкомĕсен председателĕсен, вăрман хатĕрлекен организацисен руководителĕсен республикăри канашлăвĕнчен

Çак кунсенче Шупашкарта ВКП(б) райком секретарĕсен, райсовет исполком председателĕсен, вăрманпромхоз директорĕсемпе вĕсен политика енĕпе ĕçлекен заместителĕсен тата вăрман хатĕрлекен ытти организаци руководителĕсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ.

1951—1952 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра йывăç хатĕрлесси мĕнле пыни тата Сталин юлташ умĕнче йышăннă обязательствăсене мĕнле пурнăçлани çинчен «Чăвашвăрман» трест управляющийĕ Киркин юлташ, Чăваш АССР Вырăнти топливо промышленность управленийĕн начальникĕ Стуриков юлташ, Чăваш АССР Вăрман хуçалăх управленийĕн начальникĕ Никифоров юлташ доклад туса пачĕç.

— Пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле вăрман промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисемпе колхозниксем, инженерсемпе техниксем, тата служащисем Тăван çĕршыв экономикине малалла аталантарассишĕн, тĕнчери мире çирĕплетессишĕн хăйсен вăйне шеллемесĕр кĕрешеççĕ,—тет докладчик.

Социализмлă ăмăртăва анлă сарса, треста пăхăнса тăракан вăрманпромхозсем, пĕтĕмĕшпе илсен, 1951 çулхи производство планне ăнăçлă тултарнă. Трест продукци туса кăлармалли плана пĕтĕмĕшпе 108,7 процент, вăл шутра каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 112,3 процент, турттарса кăлармалли плана 100 процент тултарнă. 1950 çулхипе танлаштарсан, трест 386 пин кубометр ытларах йывăç касса хатĕрленĕ, 332 пин кубометр çул хĕррине илсе тухнă, 514 пин кубометр турттарса кăларнă. Тăван çĕршыва 31,5 миллион тенкĕлĕх йывăç материалсем ытларах панă.

Трест механизмсемпе йывăç касса хатĕрлемелли тата турттарса кăлармалли çулталăкри плана ăнăçлă тултарнă. Колхозниксен вăйĕпе йывăç касса хатĕрлемелли çулталăкри плана 102,1 процент, каснă йывăça çул хĕррине илсе тухмалли плана 142,1 процент тултарнă.

Треста пăхăнса тăракан 13 вăрманпромхозран çулталăкри плана Хĕрлĕ Чутай, Приволжски, Вăрнар, Пĕпрес тата Çĕмĕрле вăрманпромхозĕсем ăнăçлă тултарнă.

1951 çулхи тăваттăмĕш квартал планне трест пур показательсем тăрăх та иртерсе тултарнă.

Докладчик вăрманпромхозсенче усă курман резервсем нумайăшне палăртать. Çулталăкри плана тултарайман 8 вăрманпромхоз халăх хуçалăхне 111 пин кубометр йывăç парса çитереймен. Пуян техникăпа тулли усă курни çук-ха. Первомайски вăрманпромхозра электростанцисен хăвачĕпе 26 процент, автомашинăсен хăвачĕпе 65 процент çеç усă курнă. Плана иртерсе тултарнă Вăрнарпа Çĕмĕрле вăрманпромхозĕсенче тракторсене, йывăç тиесе пушатакан крансене япăх ĕçлеттереççĕ. Механизмсемпе усă курмалли техникăллă нормăсене тултарса пырсан вăрманпромхозсем тата вуншар пин кубометр йывăç хатĕрленĕ пулĕччĕç.

Кашни вăрманпромхозра пуçаруллă, куллен паха тĕслĕхсем кăтартакан рабочисемпе колхозниксем сахал мар. Вĕсен опытне пĕтĕçтерсе сарассишĕн трест работникĕсемпе вăрманпромхоз руководителĕсем кирлĕ пек кĕрешмеççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ кадрти рабочисенчен чылайăшĕ ĕç нормине тултараймаççĕ. Ĕç тухăçлăхĕ уйрăмах Первомайски, Шăмăршă, Пăрачкав тата Канаш вăрманпромхозĕсенче пĕчĕккĕ. Первомайски вăрманпромхозра ахаль пăчкăпа йывăç касса хатĕрлекен рабочисенчен 80 процентĕ ытла, лавçăсенчен 56 проценчĕ пĕлтĕр ĕç нормине тултарман. Хĕрлĕ Чутай вăрманпромхозĕнче те ĕç нормине тултарман рабочисем нумай.

Колхозниксем пумайăшĕ кулленхи заданине тултараймаççĕ. Уйрăмах Элĕк, Шăхасан, Красноармейски тата Чурачăк районĕсенчи колхозниксен ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕккине палăртас пулать. Улатăр районĕнчи колхозниксем куллен вăтам шутпа 4,2-шер кубометр йывăç касса хатĕрлеççĕ пулсан, чылай районсенчи колхозниксем 1—1,2-шер кубометр çеç хатĕрлеççĕ. Комсомольски, Улатăр, Куславкка районĕсенчи лавçăсем куллен вăтам шутпа 4—5-шер кубометр йывăç çул хĕррине илсе тухаççĕ. Çав вăхăтрах Хĕрлĕ Чутай, Шăхасан, Красноармейски тата ытти хăшпĕр районсенчи лавçăсем 2—2,3-шер кубометр çеç илсе тухаççĕ.

Стахановла вунăкунлăх хыççăн вăрман хатĕрлес ĕç республикăра нумай вăйсăрланнă. Вăрманпромхоз директорĕсем, трест работникĕсем тата районсенчи партипе совет органĕсен руководителĕсем декабрь уйăхĕнче тунă хăшпĕр ÿсĕмсемпе лăпланса ларнă. 1951 çулхи декабрь уйăхĕнче трест кашни вунăкунлăхра вăтам шутпа 75 пин кубометр йывăç касса хатĕрленĕ, 84 пин кубометр турттарса кăларнă пулсан, кăçалхи январĕн 1-мĕш вунăкунлăхĕнче пурĕ 38 пин кубометр касса хатĕрленĕ, 57 пин кубометр турттарса кăларнă.

Сталин юлташ умĕнче йышăннă обязательствăсене чыслă пурнăçлас тесен, трестăн декабрь уйăхĕнчипе танлаштарсан, куллен 1,5 хут ытларах йывăç турттарса кăлармалла. Январĕн 1-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче вăрманта, пĕлтĕрхи декабрь уйăхĕнчипе танлаштарсан, 2,5 хут сахалтарах лавсем ĕçленĕ. Вăрманпромхозсенче механизмсемпе усă курасси те вăйсăрланнă.

Трестăн, вăрманпромхоз руководителĕсен, райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен йывăç хатĕрлес ĕçре улшăну тума татăклă мерăсем йышăнмалла. Кашни механизм кунĕн-çĕрĕн ĕçлетĕр. Кашни районăн, колхозăн вăрмана йышăннă обязательствăна палăртнă вăхăтра тултармалăх ĕç вăйĕ тата лавсем уйăрса ямалла. Кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тата иртерсе тултарассишĕн рабочисем, колхозниксем, инженерсемпе техниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва çĕнĕ хăватпа сарни кирлĕ.

Стуриковпа Никифоров юлташсем каланă тăрăх, вырăнти топливо промышленность управленийĕпе вăрман хуçалăх управленийĕ енĕпе вăрман хатĕрлевĕ çителĕксĕр хăвăртлăхсемпе пулса пырать. Асăннă управленисем йывăç турттарса кăлармалли çулталăкри плана тултарман, халĕ вăрманта ĕçлекенсем сахал. Вăрманпромхоз директорĕсемпе вăрман хуçалăх директорĕсем государство заданине вăхăтра тултарассишĕн тивĕçлĕ ответлăх туймаççĕ, рабочисемпе колхозниксен ĕçне тĕрĕс организацилеме, механизмсемпе лайăх усă курма тăрăшмаççĕ. Çав çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерни кирлĕ.

Чылай районсенчи партипе совет органĕсем вырăнти топливо промышленность управленине пăхăнса тăракан вăрманпромхозсемпе вăрман хуçалăхĕсен ĕçĕпе интересленмеççĕ, колхозсенчен плана палăртнă чухлĕ ĕç вăйĕпе лавсем уйăрса пама тăрăшмаççĕ.

Пренире 15 çын тухса каларĕ.

— Пăрачкав вăрманпромхозĕ юлса пыни механизмсемпе лайăх усă курманнинчен, колхозниксен ĕçне тĕрĕс йĕркелеменнинчен килет,—тет Пăрачкав райсовет исполкомĕн председателĕ Смыков юлташ.—Автомашинăсен хăвачĕпе 40 процент чухлĕ çеç усă кураççĕ. Çулсене вăхăтра юсамаççĕ тата юртан тасатмаççĕ. «Чăвашвăрман» трест вăрманпромхоза çителĕксĕр пулăшать. Вăрманпромхоз ОРС-ĕ рабочисемпе колхозниксен кулленхи ыйтăвĕсене япăх тивĕçтерет.

Шăмăршă вăрманпромхоз директорĕ Кайсаров юлташпа Первомайски вăрманпромхоз директорĕ Наумов юлташ каланă тăрăх, рабочисен, пĕтĕмĕшпе илсен, ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ, колхозниксем кулленхи заданине çуррине çеç тултараççĕ. Ĕç тухăçлăхне ÿстерме, малта пыракансен опытне сарма мĕн кансĕрлени, вăрманпромхозсем юлса пынине пĕтерме мĕнле мерăсем йышăнни çинчен вара Кайсаровпа Наумов юлташсем каласа памарĕç.

Тăвай райсовет исполкомĕн председателĕ Павлов юлташ Шăмăршă вăрманпромхоз руководителĕсене колхозниксене ĕçе вăхăтра вырнаçтарманшăн, тухăçлă ĕçлеме лайăх майсем туса паманшăн, сутуилÿпе культурăллă ĕçе йĕркелеменшĕн критикăлать.

Красноармейски райсовет исполкомĕн председателĕ Гринев юлташ каланă тăрăх, районта январĕн 1-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче йывăç хатĕрлес ĕç, стахановла вунăкунлăхра ĕçленипе танлаштарсан, икĕ хут чакнă. Хăшпĕр ял Совет исполкомĕсемпе колхоз правленийĕсем тата пуçламăш парторганизаци секретарĕсем государство заданине вăхăтра пурнăçлассишĕн тивĕçлĕ ответлăх туймаççĕ. Вăрманта ĕçлекенсем час-часах улшăнса тăнине тата колхоз правленийĕсем колхозниксене ертсе пыма ответлă çынсем уйăрса яманнине пула колхозниксен ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ.

Гринев юлташ Буинск вăрманпромхоз руководителĕсене колхозниксем хушшинче массăллă-агитациллĕ ĕçе йĕркелеменшĕн, ут таврашĕсемпе ĕç хатĕрĕсене юсама мастерской организацилеменшĕн, колхозниксен ĕçне тĕрĕс шута илменшĕн критикăлать.

Главснаблесăн республикăри управленийĕн начальникĕ Долбилов юлташ управлени 1951 çулта халăх хуçалăхне ĕçе юрăхлă йывăç тăратмалли плана 101 процент тултарни çинчен пĕлтерет. Коммунизмăн аслă стройкисене—Атăл çинчи гидроэлектростанцисемпе Атăлпа Дон хушшинчи канала тунă çĕре йывăç материалсем ăсатмалли çулталăкри плана 113 процент тултарнă. Шахтăсене пĕрене, экстракт тăвакан заводсене юман вутти тăратмалли задание те ăнăçлă пурнăçланă.

Хăшпĕр вăрманпромхоз директорĕсем плана пур сортиментсем енĕпе те тултарассишĕн тивĕçлĕ ответлăх туйманнипе пĕлтĕр республикăри вăрман промышленноçĕ Мускав хулинчи нумай хутлă çуртсем валли юман тăратмалли плана чылай тултарайман. Çакăншăн уйрăмах Вăрнар, Çĕмĕрле тата Хĕрлĕ Чутай вăрманпромхозĕсен директорĕсем айăплă.

Кире, Буинск вăрманпромхозĕсен директорĕсем чугун çул уйăрса паракан вагонсемпе лайăх усă курма тăрăшмаççĕ. 1951 çулхи тăваттăмĕш кварталта Буинск вăрманпромхоз йывăç тиесе ăсатмалли плана 52 процент çеç тултарнă. Ку уйăхри пĕрремĕш вунăкунлăхра Кире вăрманпромхозĕ 300 вагон вырăнне 40 вагон çеç йывăç тиесе ăсатнă. Нумай вăрманпромхозсенче вагонсем çине кăнтăрла çеç тиеççĕ.

Долбилов юлташ Хусан чугун çулĕн Улатăр уйрăмне йывăç тиесе ăсатма вагонсем çителĕксĕр уйăрса панăшăн критикăлать.

— Люльско-Сурски чугун çул хĕрринче 20 пин кубометр йывăç выртать. Вагон сахал уйăрса панипе паха материала вăхăтра ăсатаймастпăр, нумай выртнипе пĕрене пахалăхĕ чакать.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ Репкин юлташ Елчĕк, Ишлей, Шупашкар районĕсем вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе юлса пынине палăртать.

— Асăннă районсенчи райсовет исполком председателĕсем Трофимов, Одинцов тата Александров юлташсем вăрман хатĕрлевĕнче татăклă улшăнусем тума темиçе хутчен те сăмах пачĕç, анчах вĕсем ертсе пыракан районсем çав-çавах юлса пыраççĕ,—тет Репкин юлташ.

Репкин юлташ «Чăвашвăрман» трест работникĕсене вăрманпромхозсене техникăллă пулăшу сахал панăшăн, малта пыракансен опытне кирлĕ пек сарманшăн критикăлать.

— Сталин юлташ умĕнче йышăннă обязательствăсене чыслă пурнăçлас тесен, колхозсен вăрмана çуран ĕçлекенсем халиччен хинчен виçĕ хут, лавсем—икĕ хут ытларах уйăрса ямалла, кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тултарассишĕн вăя шеллемесĕр ĕçлемелле,—тет Репкин юлташ.

РСФСР Вăрман промышленность министрĕн заместителĕ Попов юлташ вăрманпромхоз руководителĕсене механизмсемпе лайăх усă курма, пур ĕçе те сехетри график тăрăх туса пыма, йывăç хатĕрлемелли плана срокчен тултарассишĕн рабочисемпе колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва çĕнĕ хăватпа вăйлатма чĕнчĕ.

Юлашкинчен ВКП(б) обком секретарĕ Т. А. Ахазов юлташ тухса каларĕ. Вăл республикăри партипе совет тата вăрман хатĕрлекен организацисем умĕнче тăракан ку чухнехи задачăсем çинчен тĕплĕ каласа пачĕ.



Мускав. СССР Наука академийĕн палеонтологи музейĕнче биологи наукисен докторĕ К. К. Флеров ĕлĕк-авал пурăннă носорог пек чĕрчун кĕлеткине сăнаса вĕреннĕ. Çав чĕрчуна индрикотерия—çĕр çинче пурăннă чи пысăк чĕрчун—тесе ят панă. Унăн кĕлеткине Казахстан территорийĕнче тупнă.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: К. К. Флеровпа Н. А. Яньшин художник пысăк чĕрчун кĕлетки патĕнче.

С. ПРЕОБРАЖЕНСКИЙ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Литература альбомĕ

Советлă Украинăри халăх тăванла республикăсенчи культура ÿсĕмне тимлĕ сăнаса пырать.

Нумай халăхсен литература произведенийĕсене украинла куçарнă, радио тăрăх ССР Союзĕнчи халăхсен, вăл шутра чăваш халăхĕн хуçалăхпа культура ÿсĕмĕ çинчен час-часах радиопередачăсем пулаççĕ.

Украина ССР Наука академийĕн Т. Г. Шевченко ячĕпе тăракан Украина литературин институчĕ тата республикăри библиотека Украина ССР-ĕ ытти республикăсемпе литература ыйтăвĕсем тăрăх çыхăну тытни çинчен калакан материалсене тĕплĕ шута илсе пыраççĕ, тĕрлĕ халăх литературин çинчен çырнă статьясене, ытти чĕлхесем çине куçарнă кĕнекесене пухаççĕ.

Тата Киевра «ССР Союзĕнчи халăхсен литератури советлă Украинăра» ятлă альбом хатĕрлеççĕ. Чăваш АССР ячĕпе тунă пайра Чăваш республики çинчен, культурăн паллă деятелĕсен юбилейĕсем çинчен, чăваш литературин Мускавра пулнă каçĕсем çинчен çырнă материалсем пур.

«Литературна газета» хаçатра 1951 çулхи кĕркунне Украинăри совет писателĕсен союзĕ чăвашсен аслă поэтне Çеçпĕл Мишшине асăнса чыслани çинчен çырнă. Хаçат: «Тарас Шевченко ячĕ чăвашсемшĕн мĕнле хаклă, Çеçпĕл Мишши ячĕ те украинецсемшĕн çавăн пекех хаклă», тесе паллă тăвать. «Украина» журналта Олекс Новицкий поэт Чернигов облаçĕнчи Остра хулинче Çеçпĕл Мишшин вилтăприне ĕççыннисем пăхса усрани çинчен, большевик-поэтăн пархатарлă сулĕ çинчен çырнă.

Чăваш республикинчи колхозсен ÿсĕмĕсем çинчен «Радянська Украина» хаçатра çырнă. Унта Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозăн пысăк çитĕнĕвĕсем çинчен çырса кăтартнă. Çак колхозăн паха опычĕпе Украинăри чылай колхозсем усă кураççĕ.

Альбомра чăваш литературин никĕсне хывнă К. В. Иванов çинчен Украинăра пичетленнĕ материалсене пухнă.

Чăваш литератури ячĕпе организациленĕ радиопередачăсен программисене, концертсем çинчен çырнă рецензисене те альбом валли пухаççĕ.

«Радянський письменник» издательстви «Украина писателĕсен произведенийĕсене ССР Союзĕнчи халăхсен чĕлхипе пичетлесе кăларни» ятлă справочник кăларма палăртнă. Справочникре Украинăри писательсен произведенийĕсене чăвашла куçарни çинчен, Украина писателĕсене чыслаcа Чăваш республикинче иртнĕ юбилейсем çинчен те материал пичетлемелле.

Георгий НАЗАРЕНКО.

Киев хули.

Ялти клубра

КÿКЕÇ. Шемшер ялĕнчи клуб—районти лайăх ĕçлекен клубсенчен пĕри. Иртнĕ çулта клуб суртне «Серп и молот» колхоз колхозникĕсем юсаса йĕркелерĕç.

Клубра час-часах концертсем, художествăллă пултарулăх каçĕсем пулаççĕ, кино кăтартаççĕ, лекцисемпе докладсем иртереççĕ. Юлашки вăхăтра «Атăл—вырăссен пысăк юханшывĕ», «Коммунизмăн аслă стройкисем», «Тĕнчери лару-тăру» тата ытти темăсем тăрăх лекцисемпе докладсем иртернĕ. Клуб заведующине Егорова юлташа ĕçре ялти интеллигенци нумай пулăшать. Художествăллă пултарулăх кружокĕсен ĕçне колхоз çамрăкĕсем активлă хутшăнаççĕ.

Клубăн сумĕнче библиотека пур, унта 1.300 кĕнеке. Вулакансен йышĕ 400 çын ытла. Вĕсенчен чылайăшĕ колхозниксемпе ялти учрежденисенче ĕçлекенсем. «Серп и молот» колхозри 64 çулхи Алексей Борисов колхозник Мичурин ĕçĕсемпе питĕ интересленет, Мичурин çырнă кĕнекесене тата ялхуçалăх ыйтăвĕсемпе çырнă ытти кĕнекесене нумай вулать.

Халĕ клубра Ленин [illegible] ĕçĕсене паллă тума хатĕрленеççĕ.

А. АЛЕКСЕЕВ.

Малта пыракансен опытне çине тăрса сармалла

Октябрьски районĕнчи Урхас Кушкăри «Звезда» колхоз мĕнпур ĕçе Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри пек туса пырассишĕн çине тăрсах кĕрешет. Уйрăмах çакă вăл иртнĕ çула колхоз председателĕ С. Яковлев юлташ районти ытти колхоз председателĕсемпе пĕрле çав ялхуçалăх артельне экскурсине кайса килнĕ хыççăн пуçланнă.

Яковлев юлташ Сталин ячĕпе тăракан колхозра пулнă чухне кĕске вăхăтрах нумай çĕнĕ япаласем çинчен тĕпчесе сăнаса пĕлме ĕлкĕрнĕ. Вăл малта пыракан колхозăн çитĕнĕвĕсене курса тĕлĕннипе çеç иртерсе яман. Экскурсинчен таврăннă хыççăн татах та пысăкрах хăватпа ĕçлеме тытăннă.

Яковлев юлташ тата актив колхоза вăйлатассишĕн мĕнле кĕрешнине илсе пăхсан, Октябрьски районĕнчи ытти колхозсенчи руководительсемпе активăн ку ялхуçалăх артелĕнчен вĕренмелли нумай.

«Звезда» колхозра агрономи наукин вĕрентĕвĕсемпе тĕрĕс усă курса, пĕлтĕр Т. Трофимов юлташ ертсе пыракан бригада гектартан 20-шер центнер ытла тырă туса илнĕ. Çавăн пекех Е. Лаврентьев, Е. Охоткин юлташсем ертсе пыракан бригадăсем те тырпул тухăçлăхне гектар пуçне 18 е 19 центнера çити ÿстернĕ.

Хăмла патĕнче ĕçлекенсем 10,8 гектар çинче кашни гектартан 8,4-шер центнера яхăн хăмла туса илнĕ. Хăмларан илнĕ тупăш 139 пин тенкĕ укçан хисепленет тата униăн 312 центнер тĕштырă илнĕ.

Строительство енĕпе те колхоз çирĕппĕн аталанса пырать. Выльăх-чĕрлĕх витисене чултан, нумай вăхăтлăха, çирĕп те паха тăваççĕ. Çавна май колхозра кирпĕч тăвас ĕçе пуçарнă. Иртнĕ 1951 çулта чултан пĕр вите, автогараж, радиоузел валли çурт лартнă. Нумай пулмасть туса пĕтернĕ колхоз клубĕпе танлашакан клубсем хуласенче çеç-ха.

Колхоз хăмла типĕтекен сушилка, икĕ авăн тунă, 29.653 тенкĕ парса двигатель туяннă. Колхозниксен килĕсене кашнинех радио кĕртнĕ. Обществăллă суртсемпе колхозниксен килĕсенче пуринче те электричество çутатать.

Пуян та культурăллă пурăнакан колхозниксем кĕнеке-хаçатсем ытларах вулама тăрăшаççĕ. Колхоз библиотекинче тĕрлĕрен кĕнекесем 2.000 ытла. Хальхи вăхăтра колхозра агрокурсра 45 çын вĕренет.

Колхоз йышлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетет. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана (чăхчĕпсемсĕр пуçне) пур енĕпе те иртерсе тултарнă.

Çитес çулхи вăйлă тырпулшĕн кĕрешӗве тухса, уя тислĕк чылай кăларнă, 68 тонна минераллă удобренисем кÿрсе килнĕ, 90 центнер кĕл, 55 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса 21 хатĕрленĕ. Уйра 1.000 гектар çине юр тытнă.

Колхозниксем пурте тенĕ пекех ĕçе активлă хутшăнаççĕ. Ĕç минимумне иртерсе тултарман колхозниксем сукпа пĕрех. Хальхи вăхăтра çуракине хатĕрленес ĕçе куллен 100—150 колхозник хутшăнса ĕçлет.

Правлени тата пуçламăш парторганизаци кадрсене вĕрентсе воспитани парассине пысăк вырăна хураççĕ. 3—4 çултан кая ĕçлекен бригадирсем тата ферма работникĕсем çукпа пĕрех. Пысăк тухăçлă хăмла тăвакан П. Фадеев юлташ çак ĕçре пĕр улшăнмасăр 1937 çултанпа ĕçлет. Т. Краснова юлташ фермăра 1943 çултанпа, аслă конюх А. Александров юлташ 1936 çултанпа ĕçлеççĕ.

«Звезда» колхоз «Волгарь» колхозпа ăмăртса ĕçлет.

«Волгарь» колхоз та (председателĕ С. Трофимов юлташ) пысăк çитĕнÿсемпе аталанса пырать. Тырпул тухăçлăхĕ çултан-çул ÿсет, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç вăйланать.

Кольцовкăри колхоза кайса курнă хыççăн Чкалов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ М. Семенов юлташ та малта пыракан колхоз опычĕсемпе анлă усă курма тытăнчĕ. Юлашки вăхăтра артель палăрмаллах ÿсе аталанма пуçларĕ. Семенов юлташ чăн малтан ĕç дисциплинине çирĕплетрĕ. Фермăсем валли çĕнĕ витесем туса, унти ĕçе механизацилессишĕн пысăк вăй хучĕ. Кашни колхозник килнех радио кĕртнĕ.

Сталин ячĕпе тăракан колхозра çак асăннă юлташсемпе пĕрлех «1-ое Мая», «Новый быт», Тимошенко ячĕпе, Маяковский ячĕпе тăракан тата ытти колхоз руководителĕсем те пулнă. Çак колхоз руководителĕсем — Ситкова, Клеверов, Горшкова, Архипов юлташсем хăйсем валли мĕнле вывод тупă-ха? Тÿрех калалла, вĕсем малта пыракан колхозăн паха опычĕсемпе ĕçре усă курма тăрăшмаççĕ, хăйсен ĕçне çĕнетсе лайăхлатассишĕн кĕрешмеççĕ. Асăннă колхозсенче ĕçе совет агрономийĕ вĕрентнĕ пек туса пымаççĕ, ĕç вăйне тĕрĕс организацилемен. Иртнĕ çуракине ку колхозсем 30—40 куна çити тăснă, кĕрхи тырăсене те срокран нумай кая юлса акрĕç. Тырпул тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе кĕркуннe, хĕлле тата çурвуне тумалли агротехникăллă ĕçсене пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Уя тислĕк çителĕксĕр кăлараççĕ, минераллă удобренисем кÿрсе килмеççĕ.

Татăклăнах çакна калама кирлĕ. Чылай колхозсенче ĕç начар пулса пыни, чи малтан, колхоз председателĕсемпе правлени членĕсем тата актив малта пыракан колхозсем пек ĕçлеме вĕренсе пыманнинчен, агротехникăна вĕренсе унпа тĕрĕс усă курма тытăнманнинчен килет.

Лайăх ĕçлекен колхозсен паха опычĕсене пропагандăлас енĕпе ВКП(б) райкомĕн ялхуçалăх пайĕн те, райсовет исполкомĕн ялхуçалăх пайĕпе унăн специалисчĕсен те пусару çителĕксĕр.

Калăпăр, мĕншĕн-ха районти колхоз председателĕсене тата бригадирсемпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсене пухса, малта пыракан «Звезда» е «Волгарь» колхозсенче канашлусем туса иртермелле мар? Çакă вăл колхозсен çитĕнĕвĕсемпе тĕплĕ паллашма, вăйлă тырпул туса илме тата йышлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме нумай пулăшнă пулĕччĕ.

Малта пыракансен ĕç опычĕсенчен вĕренсе пырсан, колхозсене вăйлатассишĕн çине тăрса ĕçлеме тытăнсан, районти актив колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем урлă колхозниксемпе колхозницăсен анлă массине вăйлă тырпул ÿстерме, йышлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме большевикла мобилизацилесен, Октябрьски районĕ те малта пыракан районсемпе танлашма пултарать.

В. АНДРЕЕВ.
В. СЕМЕНОВ.

Çуракине тĕплĕн хатĕрленмелле

ÇĔМĔРЛЕ. Иртнĕ хĕлле çуракине тĕплĕ хатĕрленсе пысăк пахалăхпа иртернĕ колхозсем вăйлă тырпул пухса кĕртрĕç. Ку тĕлĕшпе «Комбинат», Ленин ячĕпе, Сталин ячĕпе тăракан колхозсем паха тĕслĕх кăтартрĕç. Вĕсем хăйсен хирĕсенчен кашни гектар пуçне 16—20-шер центнер, уйрăм бригадăсем унтан та ытларах тĕштырă пухса кĕртрĕç. Ку колхозсем кăçал та вăйлă тырпулшăн кĕрешÿ пуçарса ячĕç. Виçĕ колхозĕ те кирлĕ таран вăрлăх хывнă, ăна тасатса çитернĕ. «Комбинат» тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсем хире çине тăрса тислĕк кăлараççĕ. «Комбинат» колхозра ятарласа тислĕк кăлармалли воскресниксем иртереççĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхоз 124 тонна, «Комбинат» колхоз—96 тонна тĕрлĕ минераллă удобренисем кÿрсе килнĕ, кашнинех 300-шер гектар çинче юр тытса хăварнă.

Çуракине хатĕрленес ĕç районта пĕлтĕрхинчен ăнăçлăрах пырать пулин те, çитменлĕхсем сахал мар-ха.

Мĕнпур вăрлăхран 50 процентне акма юрăхлă тунă.

Виçĕ колхозăн тулă, вунпĕр колхозăн пăрçа вăрлăхĕ çитмест. Чылай колхозсенче çавнашкалах хуратул, вика, техникăллă культурăсемпе çĕрулми вăрлăхĕсем çителĕксĕр.

Кăмашари «Красный пахарь» колхозра халĕ те вăрлăх тасатма тытăнман. Унпа юнашар Молотов ячĕпе тăракан колхозра та пĕр килограмм вăрлăх та тасатман. Вăрлăх тасатасси «Новая жизнь», Якуртушкĕнчи «Большевик», «Искра» колхозсенче те начар пырать.

«Ударник», «Новая жизнь», «Победа», Якуртушкĕнчи «Большевик» колхозсенче çĕрулми вăрлăхĕ суркунне пĕтĕм лаптăка лартса хăварма çитмест. Свердлов ячĕпе тăракан колхозăн вара вăрлăх пачах çук.

Курăк вăрри çителĕксĕр пирки чылай колхозсем курăк акмалли пусă çаврăнăшне йĕркелесе çитерейместĕ. Районти колхозсене 128 центнер курăк вăрри кирлĕ, халĕ вара çурри кăна хатĕрленĕ.

«Победа», Свердлов ячĕпе тăракан, «Ударник» колхозсен курăк вăрри пачах çук. Калинин ячĕпе тăракан, «Вперед» колхозсенче ку таранччен те курăк вăррине çапса шĕкĕлчесе пĕтермен.

Ялхуçалăх машинисене юсас ĕç, юр тытасси, хире тислĕк кăларасси те колхозсенче çителĕксĕр пырать. Ялхуçалăх машинисене юсама 5 колхоз—«Победа», Пренешри «1-ое Мая», Горький ячĕпе, Свердлов ячĕпе тăракан, «Путь Ленина» колхозсем пачах тытăнман.

Районти колхозсенче минераллă удобренине тивĕçлипе хакламаççĕ. Якуртушкăнĕнчи «Большевик» колхоз 30 тоннăшăн укçа тÿленĕ, илнĕ тесе председатель алă та пуснă. Анчах колхоз 6 тонна кăна турттарса килнĕ. «Ударник» колхоз 5 тонна суперфосфатшăн укçа куçарнă, пĕр килограмне те илмен. Хула çывăхĕнчи тепĕр колхоз—«14 лет Октября» колхоз 10,5 тонна удобрени илнĕ шутланать. Чăннипе вара ку колхоз укçине те тÿлемен.

Райсовет исполкомĕн ялхуçалăх пайĕн колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕçе тăтăшах тĕрĕслесе тăрса, çирĕпрех ертсе пымалла.

«Чăваш Коммуни» хаçат бригади:
В. ТОЛСТОВ,
А. ЯКОВЛЕВ,
Е. АФАНАСЬЕВ.

Юлса пыма сăлтав çук

ВĂРНАР. «Малая Цивиль» тата «Победа» колхозсем юнашарах, вĕсем пĕр ял Советне кĕреççĕ. «Малая Цивиль» колхоз членĕсем вăрманта çулсерен паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ, Тăван çĕршыва планран иртерсе нумай йывăç хатĕрлесе параççĕ. Вĕсем кăçал та хастарлă ĕçлеççĕ, Сталин юлташ умĕнче йышăннă обязательствăна çак кунсенче пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ. Вăрманта колхоз председателĕ Муравьев юлташ час-часах пулать, колхозниксене ĕçе лайăх йĕркелеме, çитменлĕхсене пĕтерме пулăшать.

«Победа» колхоз членĕсем «Малая Цивиль» колхоз членĕсен паха опычĕпе усă курмаççĕ. Вĕсем вăрман хатĕрлемелли плана çулсерен тултармаççĕ. Кăçал та япăх ĕçлеççĕ. Колхозăн 800 кубометр йывăç турттарса кăлармалла пулсан, 100 кубометр та турттарса кăларман.

«Малая Цивиль» колхоз членĕсем вăрманта пĕр улшăнмасăр ĕçлеççĕ. «Победа» колхозран ĕçлеме каякансем тăтăшах улшăнса тăраççĕ.

Н. ДЕНИСОВ.

Ăмăртăва вăйлатар

Советски районĕнчи уйрăм колхоз членĕсем вăрманта хастарлă ĕçлеççĕ. Чкалов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем йывăç хатĕрлемелли плана тултарчĕç, вĕсем плана тултаричченех вăрмантан киле килмесĕр ĕçлерĕç.

— Аслă сулăпуçăмăра панă сăмаха срокчен пурнăçласси—пирĕн тивĕç, — тет «Прогресс» колхозри вăрман турттаракансен бригадирĕ Н. Артемьев юлташ. Г. Петров, А. Яковлева, Д. Иванова юлташсем тата ытти колхозниксем ĕç нормине иртерсе тултарса пычĕç. Колхоз йывăç турттармалли плана тултарчĕ.

Вăрман хатĕрлевĕнче малта пыракан колхозсем районта сахал мар. «Сталинград» колхоз членĕсем 1.600 кубометра яхăн, Калинин ячĕпе, Суворов ячĕпе тăракан колхозсем 1.100—1.200 кубометр йывăç хатĕрленĕ. Вĕсем хатĕрленĕ йывăça турттарас тĕлĕшпе те ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Анчах пĕтĕм районĕпе илсен вăрман хатĕрлес ĕç çителĕксĕр пырать. Володарский ячĕпе тăракан колхоз членĕсен 1.000 кубометр йывăç касса хатĕрлемелле. Вĕсем 80 кубометр касса хатĕрленĕ, 50 кубометр çеç турттарса кăларнă. Колхоз правленийĕ вăрман хатĕрлеме бригада туман.

Районти колхозсем Пăрачкав вăрманĕнче ĕçлеççĕ. Вăрман хатĕрлемелли вырăн районтан чылай инçетре пулнă май ĕçлеме нумай вăхăтлăха кайни уйрăмах кирлĕ. Çакна чылай колхоз руководителĕсем шута илмеççĕ. Маленков ячĕпе, Шверник ячĕпе, Сталин ячĕпе тăракан колхозсенчен йывăç хатĕрлеме кайнă çынсем темиçе хутчен те киле сÿресе вăхăта нумай ирттернĕ. Колхоз правленийĕсем вăрмана апат-çимĕç тата ытти япаласем лессе тăрассине йĕркелемен.

Колхоз хресченĕсем Сталин юлташ патне янă çырура вăрман хатĕрлев планне чыслă тултарма сăмах пачĕç. Пуçламăш парторганизацисен çакна ĕçпе çирĕплетессишĕн социализмлă ăмăртăва анлă сарса пымалла.

Л. ÇИГАЙ.

Культура çурчĕсенче ĕçлекенсен курсĕ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи культурăпа çутĕç учрежденийĕсен управленийĕ районти культура çурчĕсен директорĕсен тата художество руководителĕсен пĕр уйăхлăх курсне ирттерчĕ.

Курсра пулнисем лекцисем итлерĕç, республикăри малта пыракан культура çурчĕсен ĕçĕсемпе паллашрĕç, художествăллă пултарулăх коллективĕсен ĕçне лайăхлатмалли майсене палăртрĕç.

Н. КАРСАКОВ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНАЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнай командованийĕн паянхи пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх доброволецĕсен чаçĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те оборонăра тăрса çапăçаççĕ, Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене чылай пысăк сиен кÿреççĕ.

Ĕнер хĕвеланăçĕнчи тата вăтаçĕрти фронтсенче, Йоньчхоньпе Кымхва районĕсенче, тăшман, нумай танксем пулăшса пынипе, Халăх çарĕн чаçĕсем йышăнса тăракан пысăк пĕлтерĕшлĕ сăртсене тытса илме тăрăшнă, темиçе хутчен те атакăсем тунă. Анчах Халăх çарĕн чаçĕсем тăшман атакисене пурне те ăнăçлă сирсе янă.

Хĕвеланăçĕнчи фронтăн уйрăм участокĕсенче пĕр-пĕрне хирĕç тупăсемпе тата пулеметсемпе пенĕ.

Ĕнер Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтакĕсем тăшманăн 3 самолетне персе ÿкернĕ, унччен çав самолетсем, ытти самолетсемпе пĕрле, Вонсан, Намхо тата Сукчхонь районĕсене тапăннă, çав районсенчи мирлĕ халăх çине бомбăсем нумай пăрахнă тата пулеметсемпе пенĕ пулнă.

ПХЕНЬЯН, январĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнай командованийĕ январĕн 16-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх доброволецĕсен чаçĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те тăшмана хирĕç оборонăра тăрса çапăçнă.

Ĕнер хĕвелтухăçĕнчи фронтăн пур участокĕсенче те Халăх çарĕн чаçĕсемпе тăшман пĕр-пĕрне хирĕç тупăсемпе тата пулеметсемпе пенĕ, хăшпĕр çĕрте çапăçусем пулса иртнĕ. Халăх çарĕн чаçĕсем хăватлă хирĕç тăнипе, тупăсемпе тата пăшалсемпе вăйлă пенипе тăшман чаçĕсене тытса чарнă, тăшманăн пĕр ротине тата икĕ танкне пĕтерсе тăкнă.

Вăтаçĕртипе хĕвеланăçĕнчи фронтсен уйрăм участокĕсенчи хăшпĕр вырăнсенче çапăçусем пулнă тата разведка отрячĕсем пĕр-пĕринпе тĕл пулса çапăçнă.

Ĕнер Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтакĕсем тăшманăн 4 самолетне персе ÿкернĕ, унччен çав самолетсем, ытти самолетсемпе пĕрле, çĕршывăн хĕвелтухăçĕнчипе хĕвеланăçĕнчи сыранĕсенчи районсенче пурăнакан мирлĕ халăха тапăннă, унта бомбăсем пăрахнă тата пулеметсемпе пенĕ пулнă.

Америкăн сывлăшри вăрă-хурахĕсем Пхеньян çине бомбăсем нумай пăрахаççĕ

ПХЕНЬЯН, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Иртнĕ кун çĕрле Америка бомбардировщикĕсем Пхеньян хулин хĕвеланăçĕнчи районсем çине, хулан халăх уйрăмах йышлă пурăнакан пайĕ çине питĕ тискеррĕн тапăннă, унта бомбăсем нумай пăрахнă тата пулеметсемпе пенĕ. Çав районсенче рабочисемпе сутăçсем пурăнаççĕ. Хула пасарĕсем те çав районсенче. Сывлăшри вăрă-хурахсем тĕрлĕ калибрлă фугаслă бомбăсем нумай пăрахнă. Бомбăсем лекнипе пула халăх пурăнакан 40 çурт арканнă. Мирлĕ халăх хушшинчен çуртсен ишĕлчĕкĕсем айне пулса вилнисем чылай. Вилнисем хушшинче — 28 ача.

Кандон уездĕнче Америкăн тыткăнри çар çыннисем пурăнакан лагерь пур. Америка самолечĕсем çав лагерь çине те бомбăсем пăрахнă. Унта 2 çурт арканнă, тыткăнри çар çыннисем хушшинче вилнисемпе аманнисем пулнă. Америкăн тыткăнри çар çыннисем Америка çарĕн командованийĕ çине хытă тарăхни çинчен каласа параççĕ.

Паян кăнтăрла Америка самолечĕсем Пхеньян хули çине тата унăн сывăхĕнчи поселоксем çине тепĕр хут бомбăсем пăрахнă, пулеметсемпе пенĕ.

ИРАНПА АНГЛИ ХУШШИНЧИ ĔÇСЕМ

ТЕГЕРАН, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Иран правительствин представителĕ пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Иран премьер-министрĕ Мосаддык Англин Иранри посолĕпе — Шепердпа тĕл пулнă.

Хаçатсем тĕлпулу пысăк йывăрлăхпа иртнине палăртаççĕ. Шеперд Иран правительствинчен Англин Иранри консульствисене хупасси çинчен панă нотăна каялла илме ыйтнă. Ăна хирĕç ответлесе, Мосаддык: çав нотăна министрсен совечĕ йышăннипе ярса панă, ăна каялла илме пултараймастпăр, меджлис Мосаддык правительствине шанманни çинчен решени йышăннă хыççăн çĕнĕрен туса хунă правительство кăна çав нотăна каялла илме пултарать, тесе каласа панă.

Январĕн 12-мĕшĕнче Тегеранра Рейтер агентствин сотрудникне, Иран подданнăйне — Мкртчяна арестленĕ. Вăл юлашки вăхăтра Рейтер агентствин Иран интересĕсене хирĕç суйса çырнăшăн Иранран кăларса янă яланхи корреспонденчĕ Герман вырăнне ĕçлесе ĕçленĕ пулнă. Шеперд тĕлпулура Мкртчяна арестленине хирĕç протестленĕ. Унăн протестне Иран премьер-министрĕ йышăнман.

Англи посолĕ Мкртчяна ирĕке кăлармa ыйтнă. Мосаддык вара хăй тĕлленех Мкртчяна ирĕке кăларма пултараймани çинчен, ăна ирĕке кăларасси суд решенийĕнчен килни çинчен каласа панă.

ООН Генеральнăй Ассамблейин улттăмĕш сессийĕ

США, Великобритани тата Франци делегацийĕсем совет сĕнĕвĕсене сÿтсе явас ĕçе чăрмантарма пултарайман

ПАРИЖ, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Совет делегацийĕн сĕнĕвĕсене — «Тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне хирĕç тата халăхсем хушшинчи мирпе туслăха тĕреклетес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен» панă сĕнÿсене сÿтсе явма парас тесе США, Англи тата Франци делегацийĕсем хытă тăрăшнă пулин те вĕсем çавăн пек хăтланнисем ăнăçсăр пулнă. Совет сĕнĕвĕсем пирки пурте хытă интересленнĕ. Çавăнпа та Америкăпа Англи блокĕнчи çĕршывсен делегацийĕсем асăннă сĕнÿсем пирки нимĕн шарламасăр тăма пултарайман. Паян Политика комитечĕн ирхи ларăвĕнче пилĕк çĕршыв представителĕсем сăмах тухса каланă, пренире сăмах тухса калама тата 21 делегаци çырăннă.

Паянхи ларура чи малтан Белорус ССР делегацийĕн пуçлăхĕ К. В. Киселев сăмах илнĕ. Вăл совет делегацийĕ «Тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне хирĕç тата халăхсем хушшинчи мирпе туслăха тĕреклетес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен» тесе ят панă сĕнĕвĕсене пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн мире сыхласа хăварас ĕçри задачине пурнăçламалла тăвас шутпа тăратни çинчен каланă. Çак сĕнÿсене тăратни Совет правительствин тулашри мирлĕ политикине, вăл пĕрмаях ытти мĕнпур государствăсемпе, — вĕсенчи социальнăй пурнăç йĕркисем мĕнле пулнине пăхмасăр, — килĕштерсе тата туслă пурăнмалла тăвас çул-йĕре çирĕп тытса пынине ĕненмелле кăтартса паракан çĕнĕ тĕслĕх пулса тăрать, тенĕ вăл.

Совет сĕнĕвĕсен кашни сакăр пункчĕ çинчен Киселев тĕплĕ каласа панă.

Атлантика блокне туни тата ют çĕршывсен территорийĕсенче çар базисем тăвас политика тĕнчери лару-тăрăва сивĕчлетнĕ тĕп сăлтав пулса тăрать, çавăнпа та агрессиллĕ Атлантика блокĕнче тăнине тата ют çĕршывсен территорийĕсенче çар базисем тунине Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн членĕ пулнипе килĕшÿллĕ мар тесе йышăнма сĕнÿ тăратнă, тенĕ вăл.

Атлантика пактне хÿтĕлекенсем Ассамблейăра çав союза хутшăннисен агрессиллĕ политикине мирлĕ политика пек кăтартма хăтланчĕç, вĕсем кун çинчен темиçе хут каларĕç. Анчах, пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ, политика вăл — сăмахпа калани çеç мар, вăл тата ĕçсене те пĕлтерет. Агрессиллĕ Атлантика блокĕн ĕçĕсенчен вара унта хутшăннисем, пуринчен малтан США, мире тĕреклетесси çинчен калани пĕтĕмпех суя халап, халăхсене улталас шутпа каланă пушă сăмах пулни курăнса тăрать.

Чылай тĕслĕхсене, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен официальнăй ĕçри çыннисен чылай заявленийĕсене, Америкăрипе, ытти çĕршывсенчи хаçатсем çырнисене илсе кăтартса, Белорус ССР делегацийĕн пуçлăхĕ Атлантика блокĕ вăл ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсене хирĕç, чи малтан, Совет Союзне тата халăх демократи çĕршывĕсене хирĕç агрессиллĕ вăрçă хатĕрлемелли блок пулнипе палăртнă.

Киселев Совет делегацийĕ Корея ыйтăвĕпе панă сĕнÿ пысăк пĕлтерĕшлĕ сĕнÿ пулни çинчен каланă.

Корейăри вăрçă пуçланнă кунранпах Совет Союзĕ яланах Корея ыйтăвне, унти хирĕçĕве мирлĕ майпа йĕркелес политика тытса пычĕ, тенĕ вăл. Совет правительстви хăй вăхăтĕнче ку ыйтупа Инди премьер-министрĕ Неру панă сĕнĕве хÿтĕлерĕ. 1950 çулхи август уйăхĕнче ССР Союзĕн Хăрушсăрлăх советĕнчи представителĕ «Корея ыйтăвне мирлĕ майпа йĕркелес пирки» резолюци тăратрĕ. ООН Генеральнăй Ассамблейин пиллĕкмĕш сессийĕнче совет делегацийĕ Корейăри хирĕçĕве мирлĕ майпа йĕркелесси çинчен çĕнĕ сĕнÿ пачĕ. Совет правительстви пуçарнипе Корейăра çапăçма чарăнасси çинчен килĕшÿ тăвас пирки калаçусем пуçланчĕç.

Анчах калаçусем мĕнле пулса пынинчен Америка захватчикĕсем Корейăри хирĕçĕве мирлĕ майпа йĕркелесшĕн мар пулни, хирĕçĕве тата ытларах сарма тăрăшни курăнать, тенĕ Киселев. Корейăри перемири çинчен пыракан калаçусенче халиччен усăллă результатсем пулмарĕç пулсан, çавăншăн шăпах та США айăплă. Корейăра вăрçă пыни Америка империалисчĕсемшĕн усăллă. Вăрçă пынă сăлтавпа вĕсем васкасах хĕçпăшал нумай хатĕрлеме, хĕçпăшал хатĕрлес ĕçе ытларах та ытларах сарса яма усă кураççĕ.

Унтан Белорусси делегацийĕн пуçлăхĕ Совет Союзĕ атомлă хĕçпăшала чарса лартас, пилĕк аслă державăн хĕçпăшалĕсене пĕр çулталăк хушшинче виççĕмĕш пайĕ чухлĕ чакарас тата çав ĕçсене пурнăçланине тĕрĕслесе тăракан тĕнчери çирĕп контроль тăвас пирки панă сĕнÿ çинчен каланă. СССР делегацийĕ ку ыйтусем тăрăх калаçса татăлма тăрăшса хăйĕн сĕнĕвĕсен малтанхи вариантне улшăнусем чылай кĕртнине палăртнă. Атомлă хĕçпăшала чарса лартмалла тунине тĕрĕслесе тăма тĕнчери контроль тăвас ыйтупа калаçса татăлма тăрăшса СССР делегацийĕ çĕнĕ ĕç турĕ, вăл хăйĕн сĕнĕвĕсене «тĕнчери контроль органĕн яланлăха çирĕплетнĕ йĕрке тăрăх, государствăсен шалти ĕçĕсене хутшăнмасăр, тĕрĕслев ĕçĕсене пурнăçласа пыма право пулмалла», тесе хушса çырчĕ.

Пĕтĕм тĕнчери мирлĕ пурнăçа тумалли чи çирĕп тата чи шанчăклă никĕс вăл — пилĕк аслă держава хушшинчи хирĕçÿсене пĕтерни пулать. Акă мĕншĕн совет делегацийĕ мире сыхламалли килĕшÿ тăвасси çинчен панă сĕнÿ питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать, тенĕ Белорусси делегачĕ. Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ пилĕк аслă державa хушшинче Мир Пакчĕ тума чĕнсе калани çине 64 çĕршывра 600 миллион çынна яхăн алă пусни СССР делегацийĕн сĕнĕвĕ мĕнпур халăхсен шухăш-ĕмĕчĕсене палăртса тăнине лайăх кăтартса парать.

Совет Союзĕн делегацийĕ тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне хирĕç тата халăхсем хушшинчи мирпе туслăха тĕреклетес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен панă сĕнÿсене Белорус ССР делегацийĕ çине тăрса хÿтĕлет, çав сĕнÿсемшĕн сасăлать, тенĕ юлашкинчен Киселев.

Унтан Норвеги, Швеци тата Перу представителĕсем сăмах тухса каланă. Вĕсем СССР делегацийĕ хăйĕн сĕнĕвĕсене — атомлă хĕçпăшала чарса лартасси, хĕçпăшалсене чакарасси тата контроль тăвасси çинчен панă сĕнÿсене улшăнусем кĕртни ку ыйтусемпе пурте пĕрле калаçса татăлнă тăрăх килĕшÿ тума май панине йышăнмасăр тăма пултарайман. Çапах та, ăс-тăнлă шухăша хирĕç пырса, вĕсем США, Англи тата Франци тăратнă сĕнĕве хÿтĕленĕ, совет делегацийĕн сĕнĕвĕсенчи халĕ асăннă пунктсене хĕçпăшалсăрланас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссипе пăхса тухма памалла, тенĕ.

Совет Союзĕн тепĕр сĕнĕвĕнче Атлантика блокне хутшăнни Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн членĕ пулнипе килĕшÿллĕ мар тесе пĕлтермелле тесе каланă. Ку сĕнÿ пирки чарăнса тăрса, Норвеги делегачĕ тахçанхи суя халапа — çав пакта СССР енчен тапăнас темĕнле «хăрушлăх» пуррипе, ăна хăйсен çĕршывĕсене «хÿтĕлес» шутпа тунă текен халапа тепĕр хут каласа панă. СССР политики çинчен çавăн пек элеклениpe Перу представителĕ Белаунде те килĕшме пултарайман. Совет Союзĕ темле киревсĕр ĕç тума шут тытнă, Совет Союзĕ вăрçă пуçласшăн тесе калама юрамасть, тенĕ вăл. Анчах, çавăн хыççăнах, Белаунде Атлантика блокне мухтаса пĕтернĕ.

Çакăнпа ирхи лару хупăннă. Кăнтăрлахи ларура дискусси малалла пырать.

А. Я. Вышинский Пĕтĕм Францири Мир Совечĕн делегацийĕпе калаçни

ПАРИЖ, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Çак кунсенче ССР Союзĕн ООН Генеральнăй Ассамблейин улттăмĕш сессийĕнчи делегацийĕн пуçлăхĕ А. Я. Вышинский патне Пĕтĕм Францири Мир Совечĕн председателĕ Ив Фарж тата çав организаци деятелĕсен ушкăнĕ — Дъастье де ла Вижери, Булье аббат, Жильбер де Шамбрэн, Вейль-Алле профессор, Лоран Казанова, Жан де Мантон, Луи Гери тата Фернан винь пырса калаçнă.

Вĕсене А. Я. Вышинскипе СССР делегацийĕн членĕ А. А. Соболев ăшă кăмăлпа йышăннă.

Ив Фарж Пĕтĕм Францири Мир Совечĕ ăна тата унпа пĕрле ĕçлекенсене — Мир Совечĕн членĕсене СССР делегаци пуçлăхĕ, СССР ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ патне пыма, ăна «Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ Пĕрлешнĕ нацисен организацине тата тĕнчери халăхсене чĕнсе каланине», Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Венăри сессийĕ йышăннăскере, тата Францин хĕçпăшалсăрланассишĕн тата миршĕн кĕрешес ыйтупа пулнă нациллĕ съезчĕ, иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнче Парижра пулнăскер, Халăха чĕнсе каланине пама хушни çинчен пĕлтернĕ.

— Эпир тăватă аслă держава — Франци, СССР, США тата Великобритани делегацийĕсенчен пире йышăнма ыйтрăмăр, — тенĕ Ив Фарж. — Пуринчен малтан пирĕн ыйтăва Эсир хапăл туса йышăннă пирки савăнтăмăр.

Ив Фарж Францин хĕçпăшалсăрланас тата миршĕн кĕрешес ыйтупа пулнă нациллĕ съезчĕ мĕнле ĕçсем туни çинчен каласа панă. Съезда 12 пин делегат пухăннă. Вĕсене Францири пур районсенчен те демократиллĕ йĕркепе суйласа янă. Вĕсем пурте хальхи вăхăтра лару-тăру йывăрланса çитнине тата халăх массисем миршĕн кĕрешнин пĕлтерĕшне пĕтĕмпех ăнланса илни палăрчĕ. Хальхи лару-тăру мĕнлине кура, сăмахран, Генеральнăй Ассамблея сессийĕнче пулса иртнĕ дискуссисенче палăрнă условисене шута илсе, Францири миршĕн кĕрешекенсен юхăмĕн пĕр тăхтаса тăмасăр пурнăçламалли задачисене çырса хунă чĕнĕве — халăха чĕнсе каланине делегацисем пĕр шухăшлă пулса ырласа йышăнчĕç.

Франци халăхĕн, — тенĕ чĕнÿре, — Пĕрлешнĕ нацисен организацине, Франци делегацине тата ытти çĕршывсен делегацийĕсене çапла каламалла:

— Халăха йышлă пĕтерекен хĕçпăшалсемпе усă курассине тата васкасах хĕçпăшал хатĕрлессине чарса лартма, хĕçпăшалсăрланасси çинчен килĕшÿ тума, вĕсене пурнăçланине тĕрĕслесе тăракан инспекципе контроль туса хума хăвăр çине обязательствăсем илĕр. Çавăн пек обязательствăсем йышăнса алă пусмасăр ан саланăр! Çак ырă шухăшлă требованисем пирки хăвăр мĕн шутлани çинчен уççăн тата ăнланмалла каласа парăр! Халăхсем эсир мĕн тăвассине кĕтеççĕ!

Конференци çавăн пекех Франци халăхне мĕнсе çапла калать: эсир парламент депутачĕсемпе правительствăна «Германие çĕнĕрен хĕçпăшаллантарнине килĕшместпĕр» тесе ответлеме хушăр, тет. Çак требовани Франци халăхĕн шухăш-ĕмĕчĕсемпе, гитлерпа оккупацирен пысăк хĕн-хур курнă тата Хĕвеланăç Германие çĕнĕрен хĕçпăшаллантарма тытăннинчен шикленсе ÿкнĕ халăхăн шухăш-ĕмĕчĕсемпе килĕшсе тăрать, тенĕ Фарж.

Ив Фаржа ответ парса, Вышинский çапла каланă: ССР Союзĕн ООН Генеральнăй Ассамблейин улттăмĕш сессийĕнчи делегацийĕ миршĕн кĕрешес юхăм тĕрлĕ çĕршывсенче мĕнле аталанса пынине тимлĕ сăнаса тăрать. Ку юхăм вăл анлă сарăлнипе кăна мар, вăл халăх массисен миршĕн кĕрешес шухăшне çирĕплетсе тата организацилесе пынипе питĕ паха юхăм пулса тăрать. Çавăн пек юхăмсăр, сăмахран, Пĕтĕм Францин Мир Совечĕ пек организацисĕр, миршĕн тăракансем вăрçă пуçланассине чарса лартассишĕн кĕрешес ĕçре пĕр-пĕринпе çыхăнса тăрайман пулĕччĕç, вĕсене пухса пĕрлештерме май килмен пулĕччĕ.

СССР делегацийĕн пуçлăхĕ çапла каланă: пире, эпир Генеральнăй Ассамблейăн хальхи сессийĕнче ĕçленĕ çĕрте, халăх массисем пулăшса тăни питĕ кирлĕ. Калас пулать, çав пулăшу пур, эпир пире пулăшса тăнине туятпăр. Пирĕн делегаци Францири пур вырăнсенчен те, хуласемпе ялсенчен те, пĕчĕк тата инçетри ялсенчен те кашни кунах çырусемпе телеграммăсем нумай илет, çав çырусенче халăх эпир Генеральнăй Ассамблейăра тăвакан ĕçсене ырлать. Пирĕн пата рабочисен, служащисен, интеллигенцин, вак буржуазин делегацийĕсем килсе çÿреççĕ. Вĕсем Францирен кăна мар, ытти çĕршывсенчен те, сăмахран, Бельгирен те килсе çÿреççĕ.

Вышинский совет делегацийĕ миршĕн мĕнле условисенче кĕрешни çинчен хăпасене каласа кăтартнă. Çав условисем йывăр. Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕнче мирлĕ пурнăç тăвассине хирĕç пыракансен ушкăнĕ ĕçлет. Çав ушкăнра, пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ, Латинла Америкăри 20 çĕршыв, США, Англи тата Британи доминионĕсем тăраççĕ. Вĕсемпе Гаити, Филиппин, Эфиопи тата ытти хăшпĕр çĕршывсен делегацийĕсем çыхăннă. Çапла вара, США-н, Англин тата Францин влаçра тăракан реакциллĕ ушкăнĕсен ООН-ра хăйсен тĕрекĕ пулнă, вĕсем ĕçе хăш еннелле çавăрса яма шут тытнă, çав еннелле çавăрса яма пултарнă. Халиччен çавăн пек пулса пынă. Анчах эпир пĕлтĕрех, Генеральнăй Ассамблея сессийĕнче, çав ушкăн çирĕп мар, вăл арканма пултарать, тесе каланăччĕ.

Генеральнăй Ассамблейăн хальхи сессийĕнче мĕн пулса тăчĕ-ха? Çав ушкăн, çак блок арканма пуçларĕ. Халĕ США-н вăрçăсем хатĕрлемелли планĕсене хирĕç пăлхав пуçланать, халлĕхе «чĕркуççи çинче тăрса пăлхав тăваççĕ», çапах та ку вăл — пăлхав.

Хăйĕн шухăшĕ тĕрĕс пулнине çирĕплетсе кăтартма Вышинский Америкăн «коллективлă мерăсем» текен сĕнĕвне, мире сыхлама тăрăшнă пек пулса сĕннĕскере, чăннипе вара çĕнĕ вăрçа хатĕрлемелли сĕнÿ пулса тăраканскерне, Генеральнăй Ассамблейăн Политика комитетĕнче сÿтсе явасси мĕнле пулса иртни çинчен каласа панă. Çав сĕнÿре ĕлĕкхи, Наполеон вăрçисен саманинчи пек, Наполеон пĕтĕм континента ытти çĕршывсемпе çыхăнса тăма чарнă вăхăтри пек, мерăсем йышăнасси тĕп вырăнта тăнă. «Коллективлă мерăсем» текенскерсен тĕллевĕ çапла: ку мерăсене йышăнма килĕшекен çĕршывсен хăйсен çарĕсене Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн аллине памалла пек, чăннипе вара вĕсен хăйсен çарĕсене США аллине, урăхла каласан, Эйзенхауэр генерал аллине пама тивет. Америкăн çав программине йышăнма США тата тепĕр 10 çĕршыв тăратнă резолюцин пĕрремĕш пунктне йышăнни — «коллективлă мерăсем» текенскерсен комитечĕн сĕнĕвне ырласа çирĕплетни кăна кирлĕ пулнă.

Анчах мĕнле пулса тухрĕ-ха? Пăлхав пуçланчĕ. Ăна арабсен çĕршывĕсен представителĕсем пуçларĕç. Вĕсем çумне Латинла Америкăри хăшпĕр çĕршывсем те — Мексика, Чили, Колумби, Аргентина, Гватемала, Эквадор пĕрлешрĕç. Латинла Америкăри чылай çĕршывсен делегацийĕсем «коллективлă мерăсем» текенскерсен комитечĕн докладне ырлама килĕшмерĕç. Инди, Индонези тата Бирма представителĕсем çав доклада ырламалла мар тесе хытă тăчĕç. СССР тата халăх демократи çĕршывĕсен делегацийĕсем, паллах ĕнтĕ, Америкăн çав «коллективлă мерăсем» текен сĕнĕвне йышăнассине хирĕç питĕ хытă кĕрешрĕç. Çапла хытă хирĕç тăнине пула США-па Англин ирĕксĕрех хăйсен резолюцийĕнчен çав пункта васкасах кăларса пăрахмалла пулчĕ. «Коллективлă мерăсем» çинчен тăратнă доклада Политика комитечĕ ырламарĕ, ăна «асра тытма» йышăнчĕ. Çав мерăсене пурнăçлама çĕршывсенчен нумайăшĕ хутшăнасшăн мар пулчĕç. Ку енĕпе резолюцире США-н авантюрăллă вăрçисене ытти государствăсене ирĕксĕрлесех хутшăнтарма май парасран нимĕнле сăлтав та ан юлтăр тесе, унта питĕ кирлĕ пункт хушнă, ку резолюци «коллективлă мерăсене» пурнăçланă çĕре хутшăнма нимĕнле государствăна та хушма пултараймасть, унта кирек мĕнле государство та çав «коллективлă мерăсене» пурнăçланă çĕре хăй ирĕкĕпе тата хăй килĕшнипе çеç хутшăнмалла, тенĕ. Çакна арабсен çĕршывĕсем тата Азири çĕршывсен ытларахăшĕ пуçарнипе резолюцие кĕртнĕ.

Америкăпа Англи блокĕн авантюрăллă хăтланăвĕ пĕтĕмпех путланса ларчĕ. Пирĕн, паллах ĕнтĕ, çав блока хăй пуçарнă киревсĕр ĕç путланса ларнă ятпа «саламлама» тулли право пур. Миршĕн кĕрешекен делегацисене Ассамблейăра çак çитĕнĕве тума пĕтĕм тĕнчери, сăмахран, Францири миршĕн тăракансем нумай пулăшрĕç, вĕсем, хăйсен социальнăй положенийĕ, политикăпа тĕн тĕлĕшĕнчи шухăшĕсем мĕнле пулнине, мĕнле профессипе ĕçлесе пурăннине пăхмасăр, питĕ пысăк инкеке — тĕнчери çĕнĕ вăрçă пуçлассине сирсе ярассишĕн кĕрешме пĕрлешнĕ, тенĕ Вышинский.

— Эпир ООН-ра чăннипех те пĕтĕм вăй-хăватпа, пысăк вăй-халпа, хамăр ĕç тĕрĕс пулнине çирĕп ĕненсе кĕрешсе пыратпăр, хамăр ĕç тĕрĕс пулнине ĕненсе тăмасăр ăнăçлă кĕрешме май çук ĕнтĕ. Çавăнпа та тĕнчери тĕрлĕ çĕршывсенчи халăх массисем, сăмахран, Франци халăхĕн массисем пулăшни пирĕншĕн питĕ кирлĕ тата паха ĕç пулса тăрать. Сирĕн пысăк йывăрлăхсене çĕнтерсе пымалла пулнине, реакци вăйĕсем сире хирĕç хытă кĕрешнине, полици сире хĕсĕрленине эпир пĕлетпĕр. Анчах миршĕн кĕрешекенсен юхăмне мĕн чухлĕ чăрмантараççĕ, ку юхăм çавăн чухлĕ ытларах тĕрекленсе тата вăйланса пырать. Миршĕн кĕрешмелли аслă кĕрешÿре Франци халăхĕ пысăк ĕç тăвать, активлă кĕрешет. Çак кĕрешÿре вăл — малта пыракан отрядсенчен пĕри. Генеральнăй Ассамблейăн хальхи сессийĕн ларăвĕсем Парижра пулса иртни пире тата миршĕн кĕрешекен ытти делегацисене хамăр умри задачăсене пурнăçлама чылай пулăшать.

Вышинский Пĕтĕм Францири Мир Советне хăйĕн пархатарлă задачисене пурнăçлас ĕçре татах та пысăкрах çитĕнÿсем тума ырă суннă. Вăл Совет Союзĕ çинчен, унăн мирлĕ политики çинчен чăн сăмаха сарни, мир тăшманĕсем юриех шухăшласа кăларса, СССР тапăнас хăрушлăх пурри çинчен элекленисене, çавăн пек элеклениpe агрессорсем хăйсем васкасах хĕçпăшал хатĕрленине тата вăрçа хатĕрленнине тĕрĕс ĕç пек кăтартма хăтланнисене тăрă шыв çине кăларни миршĕн кĕрешес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртнă.

Вышинскирен Булье аббат: СССР делегацийĕ ăна Францири миршĕн тăракансем мораль енĕпе пулăшни мĕнле ĕç туниччĕ сисĕнет, тесе ыйтнă. Вышинский çапла ответ панă: çавăн пек пулăшу панине, сăмахран, ытти делегацисем тата халăх хăйсене мĕнле тыткаланă тăрăх хаклама пулать, хальхи сесси мĕнле ĕçленине курма американецсем мар, французсем çÿреççĕ, Нью-Йоркра иртекен сессисене американецсем пыратчĕç. Ăнсăртран мар ĕнтĕ, американецсем тепĕр сессие Парижра пухассине хирĕç тăраççĕ, тесе калаçни илтĕнет.

Маларах Ив Фарж Франци халăхĕн миршĕн кĕрешес ĕçĕ ăнăçлă пулса пырасси çинчен каланăччĕ. Дъастье де ла Вижери, Франци халăхĕн миршĕн кĕрешес ĕçри малашлăхĕсем çинчен каласа, пĕр питĕ кăтартуллă факт çинчен пĕлтернĕ. Ĕлĕк правительство кризисĕсем вăхăтĕнче президент правительство тăвас пирки калаçма тĕрлĕ политикăллă партисен представителĕсене хăй патне чĕнсен, пуринчен ытларах вĕсем хăш партире тăнипе тата вĕсем ытти партисем çине мĕнле пăхнипе интересленнĕ. Халĕ вара, кризис вăхăтĕнче, президент икĕ ыйту парать: Германие çĕнĕрен хĕçпăшаллантарнă пирки эсир мĕн шутлатăр? Индо-Китайри вăрçă пирки эсир мĕн шутлатăр? — тесе ыйтать. Çакăнтан парламентра ытларахăшĕ пулса тăракансем хушшинче халĕ çав ыйтусем тĕлĕшпе ĕлĕкхи пек пĕрлĕх çукки курăнать. Францин нациллĕ никама пăхăнманлăхне çĕнĕрен туса, ăна тĕреклетессишĕн кĕрешме çирĕп шухăш тытни çинчен пĕлтерекенсен йышĕ пысăкланса пырать, çакă вара ирĕксĕрех нумай депутатсен позицийĕсенче палăрать. Ку çынсене асăннă тĕллеве пурнăçламалли çул-йĕре кăтартса парасси пирĕн задача пулса тăрать, тенĕ вăл.

Юлашкинчен Вышинский хăнасене калаçушăн тав тунă. Вăл вĕсене çĕнĕ çитĕнÿсем тума, мире юратакан мĕнпур халăхсен, пĕтĕм этемлĕхĕн ырă та телейлĕ пурнăçне тумалли пысăк задачăсене пурнăçлас çулпа ăнăçлăн малалла пыма ырă суннă.

„Мирпе прогресс çĕршывĕ пулса тăракан Российăна — мухтав!“

Тĕнчери промышленность выставкинче

БОМБЕЙ, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Бомбейра тĕнчери промышленность выставки уçăлнă. Выставкăра Совет Союзĕн павильонĕ пур. Павильона курма кашни кун вуншар пин çын çÿрет. Унта Бомбей хулинче пурăнакансем нумайăшĕ пырса кураççĕ. Январĕн 14-мĕшĕ тĕлне павильона 100 пин çын ытла пырса курнă.

Бомбейра пурăнакан Джайнрайян отзывсен кĕнеки çине: «ССР павильонĕ Инди пурнăçĕнчи питĕ пысăк событи пулса тăрать. Унти япаласене пурне те совет халăхĕн аллипе тунă, çавсене тунă совет халăхне ăшă кăмăлпа саламлатăп», тесе çырнă. Выставкăна пырса курнă Батлпвала: «Совет павильонĕ экономикăн коллективлă системи мĕн тума пултарнине лайăх кăтартса парать», тенĕ. Павильона пырса курнă çынсен ушкăнĕ отзывсен кĕнеки çине: «Мирпе прогресс çĕршывĕ пулса тăракан Российăна — мухтав!», тесе çырнă.

«Эпĕ Индире Ленинпа Сталин пек çынсем çуралчăр тесе ĕмĕтленетĕп», тесе çырнă отзывсен кĕнеки çине пĕр ватă рабочи. «Эпĕ совет республикисем чăннипех те малалла вăйланса пынине тата вĕсем тĕнчере мĕнле вырăн йышăнса тăнине куртăм. Пĕр çĕршыв та çав мирлĕ пурнăçа чунтан юратакан аслă республикăсемпе танлашма пултараймасть», — тенĕ Инди сывлăш флочĕн летчикĕ. «Вырăссен павильонĕ вăл «тимĕр чаршав» текенскер çинчен сÿпĕлтетекенсене хирĕç панă лайăх ответ пулать», тесе çырнă курма пынă çынсенчен пĕри.

Бомбейри промышленность институчĕн (Инди правительстви çумĕнчи институт) ректорĕ Кошавнах çапла çырать: «Совет павильонĕнчи станоксем конструкци тĕлĕшпе питĕ чаплă, япаласене питĕ тĕрĕс тата хăвăрт тума май параççĕ, ун пек станоксем урăх нисга та çук. Вăрçă вăхăтĕнче эпĕ Англире пултăм, унта тĕрлĕ станоксем мĕнле ĕçленине куртăм, анчах вĕсем пурте совет станокĕсенчен начартарах».

Совет павильонне Индин обществăллă ĕçсен, производство тата снабжени министрĕ Гадгил пырса курнă. Курса çÿренĕ хыççăн вăл ТАСС корреспондентне: «Совет павильонĕнче курни мана питех те кăмăла кайрĕ», тенĕ.

Республикăри шахмат чемпионачĕ

Республикăри шахмат чемпионатĕвче январĕн 17-мĕшĕ тĕлне 12 вăйă пулнă.

Тăххăрмĕш вăйăра чемпионатра малта пыракан Сергиевский Илларионова çĕнтерчĕ. Соболев — Никитина, Зилгалов — Эллене, Федоров — Чугунова, Аляутдинов — Смирнова выляса ячĕç. Егоров Сиротина çĕнтерчĕ.

Вуннăмĕш вăйăра Чăваш республикин чемпионĕ Сергиевскипе тĕл пулчĕ. Нумай вăхăт хушши пынă кĕрешÿ пĕр-пĕрне çĕнтерейменнипе вĕçленчĕ. Смирнов — Илларионова, Элле — Соболева, Сиротин Зилгалова çĕнтерчĕç.

Вунпĕрмĕш вăйăра Федоров — Смирнова, Персов — Аляутдинова, Егоров — Чугунова, Элле — Сергиевские, Илларионов — Никитина выляса ячĕç.

Вылянине курма пынă çынсем уйрăмах вуниккĕмĕш тĕлпулура Сиротинпа Сергиевский, Шупашкар хула чемпионĕ Чугунов Зилгаловпа вылянине тимлĕ сăнаса тăчĕç.

Ку вăйă кам мала тухассине татса памалла пулнă. Кĕрешÿ Сергиевский Сиротина çĕнтернипе вĕçленчĕ. Чугуновпа Зилгалов пĕр-пĕрне çĕнтереймерĕç. Сергиевский мала тухрĕ, шахмат енĕпе республика чемпионĕ пулассине çирĕплетсе хучĕ.

Юлашки — вунвиççĕмĕш вăйă умĕн Сергиевскин 11 очко шутланать. Иккĕмĕш вырăнта — Чугунов. Унăн — 9,5 очко.

Пĕлтерни

Январĕн 18 мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре ВКП(б) хула комитечĕн парткабинетĕнче «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» иккĕмĕш çул вĕренмелли кружок руководителĕсем валли лекци пулать. Тема: «Большевиксен партийĕ Совет Союзĕн Аслă Отечественнăй вăрçи вăхăтĕнче».

Лектор — Н. А. Смирнова юлташ.

ВКП(б) ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Ответлă редактор заместителĕ И. П. ПАВЛОВ-ПИНЕР.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕн — Ялхуçалăх институт преподавателĕн А. В. Плетнев юлташăн арăмĕ

ГАЛИНА ЛЕОНИДОВНА ПЛЕТНЕВА

вăхăтсăр вилни çинчен хурланса пĕлтерет.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 8. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор — 0-67, ответлă редактор заместителĕ — 3-99, ответлă секретарь — 4-26, секретариат — 3-54, промышленность пайĕ — 5-74, информаци пайĕ — 5-74, парти пурнăç пайĕ — 4-17, ялхуçалăх пайĕ — 3-97, пропаганда пайĕ — 8-61, культура пайĕ — 8-61, совет строительстви пайĕ — 8-61, çырусен пайĕ — 7-32, издательстве кантурĕ — 0-23.

НТ 01213 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.